чăваш халăх хаçачĕ

ХЫПАР

СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă

ШĂМАТ КУН 2014, утă /июль/ 5

129-130 /26535-26536/ № № Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

# Ярмăрккапа Акатуйра кăмăл-туйăм çĕкленет...



cap.ru сайтĕнчи сăн ӳкерчĕк

## Саламлатăп!

**Республикăри кооперации организацийĕсемпе предприятийĕсен хисеплĕ ветеранĕсем, пайçисемпе членĕсем, ĕçченĕсем!**

Сире Пĕтĕм тĕнчери Кооперации кунĕ ячĕпе саламлатăп!

Ку уяв пирĕн обществăн тĕп хаклăхĕсене – ырă ĕçе, пысăк яваплăха, çывăх çыншăн, пĕр-пĕриншĕн тăрăшнине – палăртать.

Паян кооперации юхăмĕ Чăваш Ен пурнăçĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнать. Ялти кооперации тытăмне йĕркеленĕ, вăл чиперех аталанса пырать. Мĕн пур шайри кредит кооперативĕсем, ял хуçалăх кооперативĕсен тĕплĕ енĕ хăйсен ĕç-хĕлне ăнăçлă пурнăçлаççĕ. Вĕсем социаллă пурнăçпа экономикăн çивĕч ыйтăвĕсене татса панă чухне патшалăхăн шанчăклă партнерĕ пулса тăраççĕ.

Потребительсен кооперацийĕн организацийĕсем яла çĕнетсе улăштарас ĕçе хастар хутшăнаççĕ. Вĕсем ялта пурăнакансене пĕрлештереççĕ, харпăр хăйĕн хушма хуçалăхĕсенче ӳстернĕ продукцие сутма пулăшаççĕ, халăха паха таварпа, пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтереççĕ, суту-илӳпе общество апатланăвĕн, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтерекен çĕнĕ объектсем уçаççĕ, ял çыннисен канăвĕн культурине ӳстерме курăмлă тӳпе хываççĕ.

Кооперации юхăмĕн ветеранĕсене çамрăк ĕçтешĕсене пуян опытне тата пĕлĕвне панăшăн уйрăммăн тав тăватăп. Чăваш Енри кооператорсене çирĕп сывлăх, палăртнă тĕллевсене ăнăçлă пурнăçлама, ĕçре çĕнĕ çитĕнӳсем, тăнăçлăх, телей тата ырлăх сунатăп!

**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**

***Кĕçнерни кун Çĕрпӳ хулинче Тихвин ярмăркки уçăлнă. Çулленех вăл хĕрарăмсен Тихвин мăнастирĕ çумĕнчи лапамра республикăра пурăнакансене кăна мар, кӳршĕ регионсенчен килекен хăнасене те пухать.***

Ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхне Михаил Игнатьева кĕвĕ ăстисем пĕрер çаврăм юрă шăрантарса, ырă сунса кĕтсе илчĕç. Çĕрпӳ тăрăхĕнчен çеç мар, кӳршĕ районсенчен те пуçтарăннă сутуçăсем ăна вун-вун тĕрлĕ тавар кăтартрĕç. Михаил Васильевич пĕрне те тепĕрне пахаларĕ, ăна-кăна ăçта сутнипе кăсăкланчĕ. Продукци туянакансемпе калаçрĕ. "Мана ку ярмăрккана пĕрремĕш хут хам çуралнă Кĕçĕн Турхан ялĕнчен урапа çине лартса лашапа илсе килчĕç. Питĕ савăнтăм. Пĕчĕк ача кăна пулсан та – темĕн те пĕр курса тĕлĕнтĕм, – терĕ М.Игнатьев. – Тавар халĕ темиçе хут нумайрах".

"Тĕрĕсех калатăр, – сăмах хушрĕ пенси çулне çитсе пыракан çын. – Ярмăрккара пурте пур, анчах Чăваш театрĕн спектаклĕ çитмест. Мĕншĕн ăна уçă вырăнта, Çавал хĕрринче, кăтартмалла мар?"

Михаил Игнатьев çава сутакан патĕнче чарăнса тăчĕ. "Мĕн хак?" – кăсăкланчĕ вăл. "Çавипе, аврипе, тытăнтаркăчĕпе пĕрле пĕри 700 тенкĕ, – хуравларĕ Красноармейски районĕнчи Енĕшкасси ялĕнчен килнĕ Михаил Емельянов. – Çавасăрри – 500".

Шупашкар районĕнчи Çатра Марка ялĕнчен килнисем йывăçран касса ăсталанă савăт-сапа туянма сĕнчĕç. Ял тăрăхĕсен администрацийĕсен вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен ĕçхĕлĕпе паллаштаракан экспозицийĕсем те кăсăклă.

Çĕрпӳсем ĕнер хăйсен Акатуйне те ирттерчĕç. Кăçал вăл тавраран пухăннисене сакăр вуннăмĕш хут савăнтарчĕ. Хĕрсем вăйă картине тăрса чăваш юррине шăрантарчĕç. Вăл Аслă Çавал тăрăх инçете-инçете ян та ян! кайнăран Суха пуçпе Çĕр туйне пуçланă пекех туйăнчĕ.

«Тĕш тырăпа пăрçа йышши культурăсене 16 пин гектар ытла акса плана ирттерсе тултартăмăр, – терĕ район администрацийĕн пуçлăхĕ Сергей Артамонов. – Иртнĕ çулсенче çум курăк ашкăрнă лаптăксене çуллен пусă çаврăнăшне кĕртетпĕр. Сухаламанни-акманни 930 гектар çеç юлчĕ. Ăна кĕркуннеччен сухаласа акатпăр. Малтан панкрута тухнă 11 предприяти ура çине тăчĕ, вĕсенче 200 çын ĕç вырăнĕ тупрĕ».

Райадминистраци пуçлăхĕ район аталаннине çирĕплетекен тĕслĕх чылай илсе кăтартрĕ. «Эпĕ Çĕрпӳсен ярмăрккине пухăннисене, Тутарстанран килнĕ хăнасене Акатуй уçăлнă ятпа саламлатăп, ырлăх-сывлăх сунатăп, – терĕ республика Пуçлăхĕ. – Çĕрпӳ районĕн ӳсĕм, хăш-пĕр енĕпе аван кăтартусем те пур. Паллах, ку сире савăнтарать, кăмăлăра уçать. Çĕрпӳ хули, ял тăрăхĕсем çĕнелсе пыраççĕ. Вĕсем пурин чун-чĕрине те шанăç кӳреççĕ».

● ➡ 2 стр.

# Пулăшма хатĕр

***Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ĕнер Шупашкарта Федерацин травматологи, ортопеди тата эндопротезировани центрĕнче иртекен Регионсен VI «Пысăк шăмăсен эндопротезированийĕн çивĕч ыйтăвĕсем» наука-практика конференцине хутшăннă.***

Медиксен форумне Раççейĕн 27 регионĕнчи, Германири, АПШри, Италири, Израильти, Швецири тата ытти çĕр-шыври травматолог-ортопедсем пухăннă. Пĕрлехи лару умĕн республика Пуçлăхĕ кунти çĕнĕ оборудованипе паллашнă, центр ĕçченĕсемпе, конференцие хутшăнакансемпе калаçнă. Михаил Игнатьев Чăваш Енре паян медицина пулăшăвĕ тĕнче стандарчĕсен шайĕнче пулнине палăртнă.

Раççей Сывлăх сыхлавĕн министерствин департаменчĕн пуçлăхĕ Михаил Крамаров Чăваш Енре медицина ăнăçлă ĕçлени çинчен каланă, Крым медикĕсем республика опычĕпе паллашас кăмăлли çинчен пĕлтернĕ.

Тĕл пулура çавăн пекех Украинăран тарса килекен çынсене пулăшассипе çыхăннă майсене сӳтсе явнă. Михаил Игнатьев палăртнă тăрăх – Чăваш Ен Украина гражданĕсене пулăшма хатĕр. Республикăна унтан 40 çемьене яхăн килнĕ ĕнтĕ, кунта хăйсен тăванĕсем патĕнче вырнаçнă. Республикăра пурăнакансем кӳршĕ çĕр-шыв гражданĕсене вăхăтлăха тӳлевсĕрех пурăнма йышăнмашкăн хатĕрри çинчен пĕлтереççĕ. Çавăн пекех ачасене – сывлăх учрежденийĕсене, ватăсене – социаллă пулăшу центрĕсене, ачаллă çемьесене социаллă реабилитаци центрĕсене вырнаçтарма палăртнă.

Конференцие пухăннисене саламланă май Михаил Игнатьев 5 çул хушшинче Федерацин травматологи центрĕнче 25 пин ытла çын сипленнине пĕлтернĕ: «Центр ĕçченĕсем питĕ кăткăс операцисем тăваççĕ. Кунта республикăра пурăнакан 10 пин ытла çын ятарлă тата паха медпулăшупа усă курнă, çакăншăн тав тăватăп».

Мускав хулин тĕп травматолог-ортопечĕ Николай Загородний пĕлтернĕ тăрăх – шăмăсен эндопротезированине аталантарас енĕпе Раççей пуçламăш утăмсем тăвать. Анчах çулталăкра 85 пин операци шайне çитнĕ ĕнтĕ, вĕсен шучĕ çуллен 20-30% ӳссе пырать. Вăл Чăваш Енре пахалăхĕпе чикĕ леш енчинчен кая мар операцисем тунине кăмăллăн палăртнă.

**Н.АНДРЕЕВ**

# Ярмăрккапа Акатуйра кăмăл-туйăм çĕкленет...

**/Вĕçĕ. Пуçламăшĕ 1-мĕш стр./.**

М.Игнатьев республикăра пурăнакансем куллен тĕл пулакан йывăрлăхсем çинче те чарăнса тăчĕ. Туса илнĕ тавара ăнăçлă сутассишĕн пыракан тупăшу вăйлансах пырать. Рынок çĕнĕрен те çĕнĕ продукципе, пулăшу ĕçĕпе тулать. «Пирĕн бизнес пĕрлĕхĕсен паянхи пурнăç ыйтакан технологисемпе усă курса чикĕ леш енче сутма паха тавар туса кăлармалла, – терĕ республика Пуçлăхĕ. – Эпир хальхи вăхăтра çĕр ĕçĕнче те, выльăхран продукци илес енĕпе те çĕнĕ технологисемпе усă куратпăр. Вĕсене çĕр-шывра чылай çĕрте, вăл шутра пирĕн республикăра та, кӳршĕ регионсенче те ĕçе кĕртнĕ».



cap.ru сайтĕнчи сăн ӳкерчĕк

Уяв тĕпелĕнче ветерансем ытларахчĕ. М.Игнатьев вĕсене: «Республика хысниничи кашни тенкĕпе тухăçлă тата перекетлĕ усă куратпăр», – терĕ. Нумаях пулмасть Çĕрпӳре ача сачĕ уçнине пĕлтерчĕ, çитес çулсенче, кирлĕ пулсан, тепре уçма шантарчĕ. 2016 çултан республикăра пĕтĕмĕшле вăтам шкулсен çурчĕсене тумалли программăна пурнăçлама тытăнĕç, спортпа физкультура çурт-йĕрне тăвĕç.

Уява пуçтарăннисене Акатуй уçăлнă ятпа ЧР Патшалăх Канашĕн депутачĕсем Олег Мешков, Вадим Николаев тата Валерий Павлов саламларĕç. Чăваш Ен Пуçлăхĕ район ĕçченĕсен пысăк ушкăнне республикăн, министерствăсен наградине, ЧР çамрăксен премийĕн Дипломне, патшалăх пулăшăвне тивĕçекен фермерсене миллионшар ытла тенкĕ уйăрассине çирĕплетекен свидетельствăсем пачĕ.

**Юрий МИХАЙЛОВ**

## Саламлатпăр

Чăваш Республикин Пуçлăхĕн 2014 çулхи утă уйăхĕн 3-мĕшĕнчи 97-мĕш указĕпе килĕшӳллĕн Чăваш Республикин социаллă пурнăçпа экономикине аталантарас енĕпе тунă пархатарлă ĕçсемшĕн Чăваш Республикин Конкурент политики тата тарифсем енĕпе ĕçлекен патшалăх службин ертӳçине **Альбина Егоровна ЕГОРОВĂНА ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ХИСЕП ГРАМОТИПЕ** наградăланă;

культурăри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул ăнăçлă вăй хунăшăн Мускав хулинчи "Чăваш культура общества" регионти общество организацийĕн правленийĕн председателĕн çумне **Николай Прохорович КУЗЬМИНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН КУЛЬТУРĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

педагогикăри тата воспитани парас енĕпе тунă тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Çĕрпӳ районĕнчи муниципалитетăн пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан "Çĕрпӳри М.В.Силантьев ячĕллĕ пĕтĕмĕшле пĕлӳ паракан 1-мĕш вăтам шкул" бюджет учрежденийĕн директорĕн вĕренӳ енĕпе ĕçлекен çумне **Марина Александровна ЕРМЕЕВĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ВĔРЕНТĔВĔН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

промышленноçри тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Шупашкар хулинчи "Рекон" акционерсен хупă обществин тĕп технологне **Валерий Павлович БАЛАБИНА,** "Сĕнтĕрвăрринчи çăкăр комбиначĕ" тулли мар яваплă обществăн генеральнăй директорне **Татьяна Андреевна СОВИНĂНА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ПРОМЫШЛЕННОÇĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

транспорт тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Чăваш Республикин тĕп хулин – Шупашкар хулин – муниципалитетăн "Шупашкарти троллейбус управленийĕ" унитари предприятийĕн тĕрĕслев мастерне **Михаил Трофимович ИВАНОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТРАНСПОРТĂН ТАВА ТИВĔÇЛĔ ĔÇЧЕНĔ"** хисеплĕ ят;

çыхăну тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Çĕрпӳ район администрацийĕн информаципе тивĕçтерекен пайĕн пуçлăхне **Евгений Валерьевич ПРОФОРОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ СВЯЗИСЧĔ"** хисеплĕ ят;

строительство тытăмĕнчи тава тивĕçлĕ ĕçсемшĕн тата нумай çул тӳрĕ кăмăлпа вăй хунăшăн Патăрьел районĕнчи "Шăнкăртам" сутуилӳпе промышленноç компанийĕ тулли мар яваплă обществăн машинист-бульдозеристне **Тефкил Абдулхакович ГИМРАНОВА,** Шупашкар хулинчи "Инкост – строительство управленийĕ" тулли мар яваплă обществăн штукатурне **Тамара Алексеевна МОРОЗОВĂНА,** Шупашкар хулинчи "Старатель" строительство компанийĕ" тулли мар яваплă обществăн строительство енĕпе ĕçлекен директорне **Сергей Васильевич СУВОРОВА "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН ТАВА ТИВĔÇЛĔ СТРОИТЕЛĔ"** хисеплĕ ят панă.

# Шупашкартан – Кӳкеçе, Кӳкеçрен – Шупашкара

***Республика прокуратуринче – районсен шайĕнчи прокурорсен черетлĕ ротацийĕ.***

Раççей Генпрокурорĕн хушăвĕпе Александр Моисеева Шупашкар хулинчи Ленин районĕн прокурорĕн должноçне çирĕплетнĕ. Хăй вăхăтĕнче Канаш прокуратуринче, Çĕмĕрле, Етĕрне прокурорĕсен должноçĕсенче ĕçленĕскер, 2007 çултанпа Александр Дмитриевич Шупашкар районĕн прокуратурине ертсе пынăччĕ.

Генпрокурор хушăвĕпех Шупашкар районĕн прокурорĕн должноçне Зельфинас Карамана уйăрса лартнă. Вăл та унччен тĕрлĕ çĕрте ĕçленĕ: Комсомольски прокуратуринче, Пăрачкав, Çĕрпӳ районĕсен прокурорĕсенче. 2001 çултанпа тĕп хулари Ленин районĕн прокуратурин тилхепине тытса пынă.

**Н.ДМИТРИЕВ.**

**ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ**

# АЧАСЕН ВИЛĔМĔШĔН КАМ АЙĂПЛĂ?

**Пепке çут тĕнчене килнĕ хыççăн пурнăçри кашни çеккунтра ашшĕ-амăшĕ уншăн яваплă пулнине хăйсен тĕпренчĕкĕ çуккисем ăнланса пĕтермеççех. Шел, ача чухне выляма тухса вăхăтра таврăнман, пĕве кĕрсен клубран е савăнăçлă каçран питĕ кая юлса килнĕ самантсенче атте-анне мĕншĕн ытла кăмăлсăр пăхнине хамăр çитĕнсе ачапăчаллă пулсан тин ăнланатпăр. Яш-хĕр чухне çăмăлттайла "мĕн сиксе тухтăр ĕнтĕ манпа" тенине çулсем иртнĕçемĕн хамăрах тиркевлĕн йышăнма тытăнатпăр. Пире çуратса ӳстернĕ çынсемшĕн виличченех ача пулнине чухламастпăр çав маларах.**

**Вилĕм тенĕрен, ун пирки сăмах пуçарма çав тери юратмастăп... Шел, юлашки кунсенче ун çинчен илтмесĕр кун та кунлами, çĕр те ирттерми пултăмăр. Телевизор е компьютер çутатăн-и, радио калаçнине тăнлатăн-и – Украинăри хăрушă пулăмсем ӳт тăрăх сивĕ чуптараççĕ. Акă çак кунсенче кăна Луганск облаçĕнче çулталăка çитмен кăкăр ачи выртакан кӳме çывăхĕнче взрыв кĕрленĕ те... Хытă чĕреллĕ çын та пĕчĕкскере пытарни çинчен кăтартнă сюжета лăпкăн пăхаймĕ. Тĕнче çав таранччен те тискер пулма пултарни пуçа шăнăçмасть. Кирек мĕнле вăрçă никама та шеллемест: пуля е взрывчатка айне хĕрарăм та, пурнăç курса ĕлкĕрейменн пĕчĕк ача та лекет.**

**Пирĕн тăрăхра, турра шĕкĕр, халăх харкашу çĕклемест. Анчах мирлĕ пурнăçра та тĕпренчĕксем çĕр çинчен çухалнă тĕслĕхсем чылайййи пăшăрхантарать. Статистикăна ĕненес тĕк кăçалхи 5 уйăхра кăна Чăваш Ен территорийĕнче тин çуралнинчен пуçласа 17 çула çитнисене шута илсен – 57 ача пурнăçĕ татăлнă. Сăлтавĕсем тĕрлĕрен. Мĕн пытармалли, чылай инкек – пирĕн, аслисен, тимсĕрлĕхне пула.**

**Вырăссем ăна "инкек пач кĕтмен çĕртен килет" тесе ахальтен каламантăр. Шупашкарти пĕр çемьере синкер алăкран шакканă кун никам та япăххине сиссе сисчĕвленмен. Чӳрече янахĕ çинче ларакан çулталăк çурăри пепкене те çав самантра асăрхакан тупăнман çав. Пĕр пӳлĕмлĕ хваттерте ашшĕ те, амăшĕ те пулсан та. Хăйсем вуннăмĕш хутра вырнаçни, çӳлти хваттерте ачашăн хăрушсăрлăх тĕлĕшĕнчен нимĕнле "хушма хурал" та çукки çак самантра нихăшĕн пуçне те кĕмен. Ăнсăртран ӳксе ĕмĕрлĕхех куç хупнă шăпăрланшăн кама айăпламалла? Хуйхăпа ахаль те аманса юлнă çемьери çынсемсĕр пуçне... Тем пек хăйсен темиçе минута пынă тимсĕрлĕхĕшĕн ĕмĕрĕпе икĕ хут тимлĕрех пулĕччĕç – чавса çывăх та çыртма çук.**

**Юлашки çулсенче "модăна" кĕнĕ пластик чӳречесем çине ятарласа çирĕплетнĕ сеткăллă кăшкарсем – акă мĕн пулса тăчĕ ку яхăнта кĕçĕн çултисен хушшинче инкек-синкек сиксе тухассин чи курăмлă сăлтавĕ. Кирек мĕнле пĕчĕк ача та çĕнĕ, халиччен сăнасах кайман япалана тытса, чĕпĕтсе, тутанса пăхсах тĕпчет. Çак "вăйă" хăйне вилĕм патне илсе çитерме пултарасса, паллах, чухламасть. Çитĕннĕ çынсем кашни хăйĕншĕн пĕтĕмлетӳ тумасан, инкекрен пăрăнмалли çул-йĕр шырамасан малашне те кун пек салху хыпарсем илтме пăрахмăпăр. Хальхи пурнăçра темĕн те шухăшласа кăларма ăста халăхăмăр вара çакнашкал пăтăрмахран сыхланмалли блокировка таврашне анлăрах усă курма пуçласса шанас килет.**

**Нумаях пулмасть Чăваш Ен сывлăх сыхлавĕпе социаллă политика министрĕ пĕчĕк ачасен вилеслĕхĕ çинчен отчет панă май тулаш сăлтавсемпе вилнисем çинчен уйрăммăн чылай калаçнăччĕ. Ăш-чикĕнчи шĕвекпе чыхăнса, амăшĕ кăкăр ĕмĕртнĕ хыççăн пепкине юнашарах çывăрттарнă май ачана сывлама паманран – темĕнле сăлтава пула та таталать пĕчĕкскерсен ĕмĕрĕ. Пурнăçри тĕслĕхсене куç умне кăларатăн та... Ача çуратмалли çуртра тухтăр палатăна кĕрес умĕн кăна пепкене хăйĕн краватьне илсе хуракан хĕрарăмсем асăннă хăрушă пулăмсем пирки илтсен тарăн шухăша каяççĕ-ши?**

**Сăмахăма çапах та ырă фактсене асăнсах вĕçлем. Кăçалхи пĕрремĕш çур çулта çулталăка çитмен пĕр ачана та çухатман районсем пур. Улатăр, Элĕк, Куславкка, Хĕрлĕ Чутай, Сĕнтĕрвăрри, Пăрачкав, Çĕмĕрле, Елчĕк, Тăвай тăрăхĕсем вĕсем. Тимлĕхе çивĕчлетсен республикăн мĕн пур территорийĕнче çӳçентерекен хыпарсем сахалрах пулĕччĕç.**

**Ирина ПУШКИНА**

# Тĕп вырăнта – ял çыннисен интересĕсем

***Кооператорсен тĕнчери пĕрлĕхĕ çуллен утă уйăхĕн пĕрремĕш шăмат кунĕнче Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунне паллă тăвать. Ăна ПНОн Генеральнăй Ассамблейи кооперативсен пĕрлĕхне пĕтĕм тĕнче умĕнче кăтартас тĕллевпе туса хунă. Пирĕн паянхи хăна – Чăвашпотребсоюз Канашĕн председателĕ, Раççей Центросоюзĕн Канашĕн членĕ, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕ Валерий ПАВЛОВ.***



• Крым кооператорĕсем Çĕрпӳ райповĕн çăкăр комбиначĕн ĕçĕпе паллашаççĕ.

**– Валерий Михайлович, республикăра ял хуçалăх, кредит кооперативĕсем йышлă, анчах ялшăн потребительсен кооперацийĕ, 120 çул ытла ял çыннисене таварсемпе тата пулăшу ĕçĕсемпе тивĕçтерекенскер, çав вăхăтрах социаллă нумай тĕллеве пурнăçлаканскер, уйрăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ.**

– Ял çыннисен ырлăхĕ, вĕсен пурнăçĕн шайĕ пирĕншĕн экономика ĕç-хĕлĕн тухăçлăхĕн шайĕнчех – тĕп вырăнта. Урăхла пулма та пултараймасть, ял çыннисем пирĕн пайщиксем, пирĕн кӳршĕсем-çке, вĕсем пирĕн ĕçченсемпе юнашар вăй хураççĕ, пĕрле пурăнаççĕ. Шăпах çавăнпа стационар лавккасем çук çĕрте вырăна туха суту-илӳ йĕркелетпĕр, инçетри тата çын сахал пурăнакан 300 ялта тăкаклă лавккасене тытса тăратпăр.

Пĕлтĕр Чăваш Республикинчи кооперации юхăмĕ 120 çул тултарнине паллă турăмăр. Савăнăçлă мероприятисемпе, хамăрăн чи лайăх ĕçченсене, çемье династийĕсене, ветерансене, чысланипе кăна та мар. Иртнĕ çул пирĕншĕн хăш-пĕр енĕпе улшăну çулĕ пулчĕ. Эпир хамăрăн суту-илӳ сетьне çине тăрса аталантаратпăр, унта вырăнти, Чăваш Енре туса кăларнă продукци сутăнать, лавккасене, общество апатланăвĕн предприятийĕсене, аптекăсене автоматизацилетпĕр, таварсене централизациленĕ майпа туянатпăр. Социаллă миссие те манмастпăр, çав шутра эмел курăкĕсен, ял хуçалăх продукцийĕн хатĕрлевĕпе ĕçлетпĕр – ял çыннин хушма ĕç пултăр. Пĕлтĕр кăна пире панă ял хуçалăх продукцийĕшĕн ял çыннисене эпир 650 млн ытла тенкĕ тӳленĕ.

**– 2013 çул кăтартăвĕсем Чăвашпотребсоюз Центросоюз тытăмĕнче малтисен шутĕнче пулнине тепĕр хут çирĕплетрĕç.**

– Чăнах та, Пĕтĕм Раççейри регионсенчи союзсен тата кооператив организацийĕсен ăмăртăвĕн 2013 çулхи кăтартăвĕсем тăрăх Чăвашпотребсоюза пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле аталантарнăшăн – иккĕмĕш, общество апатланăвне аталантарнăшăн – виççĕмĕш, хатĕрлев ĕç-хĕлне аталантарнăшăн – виççĕмĕш, пурлăхпа техника никĕсĕн управлăхĕшĕн тата ăна аталантарнăшăн – пĕрремĕш, федерацин Атăлçи округĕнче пĕтĕмĕшле ĕç-хĕле аталантарнăшăн иккĕмĕш вырăнсене панă. Сумлă çак наградăсем – 8 пин çынран тăракан пĕтĕм коллективăн тава тивĕçлĕ ĕçĕ, кооператив организацийĕсен ертӳçисен, Чăвашпотребсоюз аппарачĕн ĕçĕн, республика Правительстви, Патшалăх Канашĕ, депутатсем тата вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен пуçлăхĕсем пулăшнин кăтартăвĕ. Вĕсем пирĕн пĕтĕм ĕçĕн тĕллевĕ ял çыннисен пурнăç шайне çĕклесси пулнине пĕлеççĕ, ăнланаççĕ.

Чăвашпотребсоюз предприятийĕсемпе организацийĕсен ĕç-хĕлĕн пĕтĕмĕшле калăпăшĕ пĕлтĕр 10 млрд тенкĕрен иртрĕ. Тĕрлĕ шайри бюджетсене 660 млн тенкĕ хывнă. Республикăри районсенче эпир çĕнĕ 22 лавкка тата общество апатланăвĕн 4 предприятине уçрăмăр, нумай объекта реконструкцилерĕмĕр. Çак ĕçе, паллах, кăçал малалла тăсăпăр. Пĕр вырăнта тăмастпăр, аталанатпăр, инноваци проекчĕсене, суту-илĕвĕн çĕнĕ технологийĕсене ĕçе кĕртетпĕр. Анчах эпир тăрăшни çеç çителĕксĕр. Яла чĕртес, уйрăм çынсен хушма хуçалăхĕсене пулăшас ыйтусене чи çӳллĕ шайра татса памалла. Çакăн çинчен эпĕ Пĕтĕм Раççейри ял кооперативĕсен Санкт-Петербургра иртнĕ иккĕмĕш съездĕнче сăмах илнĕ май та каларăм. Раççей Правительствин Председателĕн çумĕ Аркадий Дворкович, съездăн пĕрлехи ларăвне хутшăннăскер, сăмах илнисен шухăшĕсем тĕлĕшпе комментари панă май потребкооперации представителĕсем панă сĕнӳсене ырларĕ. Пĕрле вăй хурсан кăна эпир курăмлă çитĕнӳсем тума пултарăпăр.

Чăвашпотребсоюз опычĕпе паллашма çак кунсенче республикăна Крымпотребсоюз Канашĕн председателĕ Александр Кудин тата Севастополь хулин коопрынкторгĕн директорĕ Артем Ларин килсе кайрĕç. Тĕп тĕллевĕ – Чăваш Ен кооператорĕсен ĕç опычĕпе паллашасси. Вĕсем Чăвашпотребсоюзăн Етĕрнери аш-какай комбинатĕнче, Элĕк тата Çĕрпӳ райповĕсенче пулчĕç, кунта мĕн курнине ырласа хакларĕç. Çакнашкал визитсем Крым Республикин потребительсен кооперацийĕн Раççей Федерацийĕн экономика тата право анлăшĕнчи интеграцине тĕревлĕç, Чăвашпотребсоюз опытне шута илнĕ май Крым потребкооперацийĕ Раççей экономикинче хăйĕн вырăнне тупассипе çыхăннă процесс ăнăçлă пуласса шанатăп.

**– Чăвашпотребсоюзшăн ĕçхĕлĕн хăш енĕсем тĕп вырăнта?**

– Пирĕн лайăх тĕп ен шăпах çакă пуль: ĕç-хĕлĕн потребкооперацишĕн йăлана кĕнĕ мĕн пур çул-йĕрне тĕпе хуратпăр. Производство, хатĕрлев, суту-илӳ, общество апатланăвĕ, йăла ыйтăвĕсене тивĕçтересси, аптека ĕçхĕлĕ, кадрсем хатĕрлесси. Мĕн пур отрасльте модернизацие çул панă, управленин çĕнĕ технологийĕсене ĕçе кĕртетпĕр. Потребкооперацире вун-вун çул ĕçлекен специалистсем хăйсен опытне çамрăксене параççĕ, çав вăхăтрах вĕсенчен, пирĕн пата йышлăн килекенскерсенчен, хăйсем те вĕренсе пыраççĕ. Специалистсене хатĕрлес, çĕнĕрен вĕрентес ыйтусемпе Чăвашпотребсоюзăн Шупашкарти кооперации техникумĕ тата Раççей потребкооперации университечĕн Шупашкарти кооперации институчĕ ĕçлеççĕ. Çакă уйрăмах савăнтарать: кооперации учрежденийĕсенче ятарлă вăтам тата аслă пĕлӳ илес кăмăллă абитуриентсен шучĕ чакмасть. Çакă потребкооперацири вĕренӳпе ĕç сумлăхне кăтартать.

Хамăрăн тĕп отраслĕсене, Чăвашпотребсоюзăн тĕп производство предприятийĕсен продукцине çак кунсенче черетлĕ хут Регионсен «Регионсем – чикĕсĕр ĕçтешлĕх» пĕрлехи куравĕнче кăтартрăмăр. Пирĕншĕн ку – ятсума кăтартмалли курав, унта хамăрăн çитĕнӳсемпе, çĕнĕ продукципе паллаштаратпăр. Ăна вырăнти, уйрăм çынсен хуçалăхĕсенчен сутăн илекен, экологи тĕлĕшĕнчен таса чĕр тавартан хатĕрлетпĕр. Тĕслĕхрен, Чăвашпотребсоюзăн Етĕрнери аш-какай комбиначĕ туса кăларакан çурма тĕтĕмленĕ «Испанские колбаски», «Чувашские» пельмень, вассабиллĕ салă тата ыт.те. Питĕ кăмăллă: пирĕн экспозицисемпе ахаль хăнасем, республика ертӳçисем кăна мар, ытти регион представителĕсем те интересленчĕç – унта та потребсоюзсем ĕçлеççĕ.

**– Хăвăрăн професси уявĕ вăхăтĕнче, Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕнче, эсир йăлана кĕнĕ Райпо кунĕсене ирттеретĕр…**

– Çапла, çĕртме уйăхĕнче, сăмахран, Мăн Сĕнтĕр райповĕнче Райпо кунĕ иртрĕ ĕнтĕ. Хамăрăн пайщиксене, тавар туянакансене, туссемпе ĕçтешсене йыхравларăмăр, чи лайăх ĕçченсене, эмел курăкĕсем пухакансен, ял хуçалăх продукцийĕ паракансен конкурсĕсен çĕнтерӳçисене Хисеп грамотисемпе наградăларăмăр. Парнесен вылявне, ачасен дискотекине ирттертĕмĕр. Художество пултарулăх коллективĕсем куракансене хăйсен юрри-кĕввипе савăнтарчĕç. Çакнашкал мероприятисем, паллах, потребкооперации ят-сумне çĕклеççĕ. Ял çыннишĕн вара – кулленхи ĕçсенчен, пахчаран канмалли уяв. Праçник илемлĕ фейерверкпа вĕçленчĕ.

**– Потребительсен кооперацийĕнче профсоюз юхăмне те упраса хăварнă. Сирĕн ĕçченсем тĕрлĕ конкурса, спорт турнирĕсене хутшăнаççĕ. Çакăн çинчен те каласа парсамăр.**

– Чăвашпотребсоюз Канашĕ, Чăваш Республикин потребкооперации тата предпринимательлĕх ĕçченĕсен профсоюзĕпе пĕрле кăçал спортăн тăхăр енĕпе 12-мĕш Спартакиада ирттерет. Унта кооператив организацийĕсен ертӳçисем те хастар хутшăнаççĕ, çапла майпа хăйсен ĕçченĕсене физкультурăпа, спортпа туслаштараççĕ. Хамăрăн сотрудниксен ачисем валли те пултарулăх конкурсĕсем йĕркелетпĕр. Кăçал черетлĕ хут «Потребительсен кооперацийĕн мисĕ» конкурс ирттертĕмĕр, потребительсен кооперацийĕнче çамрăк, илемлĕ, талантлă хĕрсем ĕçленине тепĕр хут курса ĕнентĕмĕр. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ ачасен «Салют» сывлăх лагерĕн никĕсĕ çинче потребкооперацин çамрăк ĕçченĕсен форумĕ иртрĕ. Пирĕн кооперации çамрăкĕсем вăхăта усă сывлăшра усăллă ирттерчĕç: флешмобсем, пултарулăх конкурсĕсем, карьера ӳсĕмĕн темипе тренингсем йĕркелерĕмĕр. Кунашкал мероприятисем коллектива пĕтĕçтереççĕ, ĕçлекенсене пĕр-пĕрне лайăхрах пĕлме пулăшаççĕ, эппин, ĕçлес пултарулăха ӳстереççĕ. Кĕркунне хамăрăн сотрудниксен çул çӳревĕсене черетлĕ хут йĕркелеме палăртатпăр, ветерансене Центросоюзăн тĕп сывлăх учреждениине санаторипе курорт сиплевне ярăпăр. Пĕлтĕр çавнашкал икĕ çул çӳрев пулнăччĕ, çынсем кăмăллă, апла тăк çакна йăлана кĕртмелле. Пирĕн республикăра, çав шутра потребкооперацире тĕп пуянлăх – çынсем. Меллĕ самантпа усă курса Чăвашпотребсоюз Канашĕн тата правленийĕн ячĕпе, хам ятпа потребкооперации ĕçченĕсене, ветерансене, пайщиксене, потребкооперацие вăл е ку енĕпе çыхăннă мĕн пур çынна Пĕтĕм тĕнчери кооперативсен кунĕ ячĕпе саламлатăп. Çирĕп сывлăх, тăнăçлăх, ырлăх, ĕмĕтсене пурнăçлама сунатăп.

**Н.АНТОНОВА.**

В.СОРОКИН сăн ӳкерчĕкĕсем




• Чăвашпотребсоюзăн Регионсен пĕрлехи «Регионсем – чикĕсĕр ĕçтешлĕх» куравĕнчи экспозицийĕ.

Çын тата саккун

# Ултавăн вĕççĕр-хĕрсĕр серепи

**_Кăçалхи кăрлач-çу уйăхĕсенче республикăн тĕп хулинче ултавăн 339 тĕслĕхне регистрациленĕ. Ку пĕлтĕрхи çак тапхăртинчен самай нумайрах, çавна май ШĔМĕн Шупашкар хулинчи управленийĕн ертÿçисен пăшăрханăвĕ сăлтавлă пулни куç кĕрет. Вĕсемпе курнăçнă май ултавăн пайăр тĕслĕхĕсем, шăнман пăр çине ларса юласран асăрханасси пирки тĕплĕн калаçрăмăр._**

Хула полицийĕн пуçлăхĕн çумĕ Андрей Перлов ултавçăсем мĕнле мелсемпе усă курнине пĕлсе çитнĕ ĕнтĕ. Çав мелсем çĕнелсех, преступниксен чееленсех пыраççĕ. Эпир çынна шанма хăнăхнă вĕт, киревсĕр шухăшлисем çакăнпа усă кураççĕ те. Горгаз ĕçченĕсем пек пулса пыраççĕ, укçа реформи пуçланнă тесе суяççĕ, юмăç янă пек тăваççĕ... Уйрăмах «ăста» алăллисем сутуçа укçа тĕркине тыттарнă май темиçе купюрăна хĕстерсе юлаççĕ, ытти мелпе усă кураççĕ.

Анлă тема – телефонпа улталани. «Ултавçăсем çын психологине лайăх пĕлеççĕ, – тет Андрей Анатольевич, – пиртен кашниех çывăх çынсемшĕн пăшăрханать, нумайăшĕ пысăк приз шантаракансен вăлтине çакланать... Шăпах çакă – преступниксен тĕллевĕсене тÿрре кăларакан никĕс». Тепĕр чух кулăшла та пулса тухать. Полици подполковникĕ çавнашкал пĕр тĕслĕхе аса илчĕ. Шупашкарта мар, вăл темиçе çул каялла Улатăрта пулнă. Ватă çынна такамсем ывăлу авари тунă, ăна яваплăхран хăтармашкăн укçа тÿлемелле тенĕ. Арçын çак ыйтăва пуçланă. Полици ĕç-пуçа тĕпчеме пуçланă та – хайхискерĕн ывăл çук та иккен! «Мĕншĕн çапла хăтлантăм – хам та калаймастăп...» – ÿкĕнчĕ кайран мучи.

Çакăн евĕр тепĕр тĕслĕх пирки тĕп хула полицийĕн пуçлăхĕн тепĕр çумĕ Геннадий Иванов каласа пачĕ. Вăл Шупашкартах пулнă. Çĕрле телефон янăраса кайнă та – ăна ватă çын тытнă. Линин тепĕр вĕçĕнчи çын хăнăхнă схемăпа усă курнă: ывăлу – инкекре, ăна çăлмашкăн укçа тÿлемелле, терминал урлă куçарса парăр...

Çав самантра ывăлĕ хваттертех пулнă, тепĕр пÿлĕмре çывăрнă, анчах ашшĕн алăка уçса пăхма ăс çитмен, хваттерти пĕтĕм укçана илнĕ те çуртран тухса терминал патне утнă. «Çĕр варринче терминала купюра хыççăн купюра чикекен арçынна çав вăхăтра унтан иртсе каякан полици патрулĕ асăрханă, – калаçăва тăсать Геннадий Львович. – Сисчĕвленсе чарăннă: «Мĕн хăтланатăр?» Лешĕ вара çав-çавах укçа куçарать, çийĕнчен полицейскисене «ман пата ан çывхарăр» тесе чарать.

Çумри пĕтĕм укçине куçарнă – 120 пин тенкĕ патнелле. Кану кунĕсем пулнине кура полици çав укçа куçăмне тÿрех йĕрлеймен, çавăнпа ултавçăсен йĕрĕ çине те часах ÿкме май килмен. «Çавна май улталаннă хайхи арçын полици нимĕн те тумарĕ, укçана тавăрса памарĕ тесе пирĕн пирки çур çул çăхавсем çырчĕ», – кулянса палăртрĕ полици подполковникĕ.

Пурне те мар, çапах чылай тĕслĕхре ултавçăсене тупма, явап тыттарма май килет. Кăçалхи преступленисенчен 197-шне уçса пама пултарнă. Ыттисемпе ĕçлеççĕ. Ытларах чухне асăннă йышши ултав мелĕсемпе ентешсем мар, ютри çынсем ĕçлеççĕ. Калăпăр, сыщиксем «пулăçсем» ят панă икĕ ушкăн – Мускавран тата Узбекистанран. Сăмах май, чăннипех интереслĕ меслет. Киревсĕр шухăшлисем валли хăйне евĕр вĕренÿ пособийĕ ан пултăр та – çапах ун пирки кăшт тĕплĕнрех каласа пани вырăнлă. Сăмах урамсенчи, ытти тÿлев терминалĕсемпе çыхăннă ултав пирки. Пĕтĕм вăрттăнлăха уçса памăпăр, çапах ансатлатса ăнлантарас тăк – схема çапларах: преступниксем купюрăна çинçе леска вĕçне çыпăçтараççĕ, çав укçапа телефоншăн тÿлеççĕ. Терминала чикеççĕ те – тÿлев телефон шучĕ çине кучнă хыççăн хайхи лескапа купюрăна терминалтан каялла туртса кăлараççĕ. Çапла майпа пĕр терминалтанах темиçе хут та укçа куçарма пулать. Паллах, преступниксем пĕр терминал патĕнче вăрах тытăнса тăмаççĕ, теприн патне каяççĕ, виççĕмĕшне лескаллă купюра чикеççĕ – чăннипех вăлта янă пек вĕт.

Терминал, паллах, укçана каялла туртса кăларнине регистрацилеймест – видео кăна çынна ÿкерсе юлма пултарать. Апла тăк ултавлă тĕслĕхсем пирки мĕнле пĕлмелле-ха? Преступниксем пысăк купюрăсемпе – 1, 5 пин тенкĕлĕххисемпе, усă кураççĕ, кайран киберенчĕк мелĕпе усă курса хайхи «виртуаллă» тенкĕсене укçана çавăраççĕ. Телефон шучĕ çине çавнашкал пысăк укçа куçарнă тĕслĕхсем сисчĕвлентерме тивĕç. Преступниксене тупса палăртма шăпах çакă пулăшать. Кăçал Шупашкарта çавнашкал 4 тĕслĕхе шута илнĕ. Çапах, полици шухăшĕпе, кунашкалли ытларах та пулма пултарать, мĕншĕн тесен терминалсен хуçисемшĕн, сăмахран, 1 пин тенкĕ – пысăк çухату мар, çавăнпа вĕсем хăш-пĕр тĕслĕх пирки шалти ĕçсен органĕсене пĕлтермессе те пултараççĕ.




Çĕнĕрен те çĕнĕ мелсем çураласçĕ. Управленин экономика хăрушсăрлăхĕн тата коррупципе кĕрешекен пайĕн пуçлăхĕ Андрей Скворцов финанс пирамидисем каллех ĕçлеме тытăнни çинчен пĕлтерчĕ. Чăн та, калăпăшĕпе паллă та шавлă МММ йышши пирамидăсемпе танлаштараймăн, вĕсем пĕчĕк, анчах сиенĕ курăмлă. Пысăк процентсем шантарса халăхран укçа пухаççĕ, темиçе кун укçа тÿлем пек тăваççĕ те – самантрах çухалаççĕ. Нумаях пулмасть сиенсĕрлетнĕ пĕр ушкăн – шăпах çав ретрен, гастролерсем Чăваш Ене те килнĕ, çĕр-шывăн ытти регионĕнче те ĕçленĕ.

Пакунлисем преступленисене уçса парас енĕпе кăна мар, профилактикăпа та пысăк ĕç тăваççĕ. Çынсене асăрханулла пулма сĕнекен памяткăсем сарни, тĕл пулусем ирттерни, паллах, пулăшать, çапах, Андрей Перлов йышăннă тăрăх, шанчăклă сыхланса пĕтерме май çукрах çав. Çак кунсенче кăна пĕр пенсионер ултавçăсен вăлтине çакланнă – «инкеке лекнĕ» ывăлĕшĕн укçа куçарса панă. Ĕç-пуçа тĕпченĕ май вара çакă палăрнă: ултав умĕнхи кун кăна ватăскерпе участок уполномоченнăйĕ курнăçнă, ултавçăсем усă куракан мелсем пирки каласа панă, тимлĕ пулмалли пирки асăрхаттарнă. Çук, пур пĕр улталаннă.

Халь ав полици шăнман пăр çине ларса юлнă тепĕр ушкăна пулăшас тĕллевпе ĕçлет. Улталаннисем – теçеткене яхăнах. Вĕсене ютран килнĕ çынсем брифинг ирттерсех Мускав облаçĕнче регистрациленнĕ пĕр организаци йышне кĕме ÿкĕтленĕ. Условийĕсем илĕртÿллĕ: 60 пин тенкĕ тÿлемелле те – Таиланда каймалли путевка параççĕ, çийĕнчен çак укçана тупăшлă майпа инвестицилеççĕ иккен. Усламĕ пысăк пулать – «сире ватлăхра пĕр шухăшсăр пурăнма та çитĕ». Илĕртÿллĕ условисем çынсене килĕшнĕ – укçа хывнă. Халь укçи те, инвесторсем те çук – вĕсене шыраççĕ.

Янттине хапсăнмалла мар. «Тÿлевсĕр сыр» сĕнеççĕ тĕк – çакă тÿрех сисчĕвлентерме тивĕç. Ултавлă СМСсем, сăмахран, кашнинех килеççĕ – вĕсене хуравлама васкани вырăнсăр. Андрей Перлов хăй те çавнашкал СМС илнĕ-мĕн: «Анне, инкеке лекрĕм, укçа куçарса пар», – çапла çырнă. Хуравларăм: «Анне пулам-ха – çавăн чухне укçа ярса парăп». Сăмах май, çавнашкал СМС илсен кун пирки полицие пĕлтерсе чăрмантармалла-и? Подполковник каланă тăрăх – паллах, СМС яни преступлени мар. СМС янă, çын укçа куçарса панă, ултавçă укçана илнĕ – çакăн хыççăн тин преступлени вĕçленнĕ шутланать, ултавçа явап тыттармалли никĕс пур. Апла пулин те ултавлă СМСсем пирки полицие евитлени вырăнлă: «Çак информаци пире оперативлă ĕçре пулăшĕ».

Сыхланакана турă сыхлать теççĕ те – сĕнмелли çеç юлать: асăрханулла пулăр!

■ **Николай КОНОВАЛОВ**

### Улталанасран сыхланма – темиçе сĕнÿ:

*1. Палламан çынна алăк уçса ан кĕртĕр. Вăл, калăпăр, хăйĕн пирки юсав службин ĕçченĕ е социаллă служба представителĕ тесен те кĕртме ан васкăр, документĕсене ыйтăр, унăн полномочийĕсем пирки вăл каланă организацие шăнкăравласа пĕлĕр.*

*2. Хваттере, пÿрте ют çынна кĕртме тивсен ăна куçран ан вĕçертĕр, енчен те газ службин контролерĕсем, социаллă ĕçченсем, слесарь е электрик сирĕн пата чĕнмесĕрех килчĕç тĕк – тÿрех сисчĕвленмелле.*

*3. Ултавçăсем çыннăн хĕрхенÿ туйăмне вăратма тăрăшаççĕ: шыв, эмел, шăнкăравлама телефон ыйтаççĕ. Чăннипех пулăшу кирлĕ тĕк шыва е эмеле эсир вĕсене алăка уçмасăрах пама, васкавлă медпулăшу чĕнме пултаратăр.*

*4. Сирĕн пата поликлиникăран тесе шăнкăравлама пултараççĕ. Сăмахран, тăванăр йывăр чирли пирки пĕлтереççĕ. Çак «спектакльте» сирĕн чир историне, тăванăрсен ячĕсене те калама пултараççĕ. Ку – ултав! Чăн тухтăр çакнашкал «хыпарсене» телефонпа каламасть. Калаçсан-калаçсан вăл хаклă эмел е операци кăна пулăшма пултарни пирки пĕлтерĕ – ан ĕненĕр!*

*5. Сире урамра кам та пулин чарса мĕн те пулин ыйтсан, сĕнсен те асăрханмалла. Кăмăллă çак çын ултавçă пулма пултарать – ăна сирĕн укçăр кăна кирлĕ. Телефонсем, компьютерсем, электрон архивĕсем сирĕн пирки нумай пĕлме май параççĕ. Палламан çынсем пырсан, сирĕн пирки вĕсем мĕн те пулин пĕлни палăрсан – каллех асăрханăр, вĕсем сире улталама хатĕрленеççĕ.*

# Упăшки ертсе пырать, арăмĕ пурнăçлать

**_Ытти ĕçре çакнашкаллине, çывăх çынсем аллаллăн ĕçленине, ырламалла кăна пуль, анчах бюджет учрежденийĕсенче кунашкалли пулмалла мар – ун пеккине коррупципе кĕрешесси çинчен калакан саккун «интерессен хирĕç тăрăвĕ» тесе хаклать. Элĕк районĕн прокуратури шăпах асăннă саккун мĕнле пурнăçланнине тĕрĕсленĕ, çитменлĕхсем тупса палăртнă._**

Районти муниципалитетăн темиçе вĕренÿ учрежденийĕнче ертÿçĕсем хайхи интерессен хирĕç тăрăвне сирме мерăсем йышăнман. Калăпăр, Карачура вăтам шкулĕнче хуçалăх заведующийĕн должноçĕнче директор мăшăрĕ ĕçлет. Вăл шкул директорне, çывăх çыннине, тÿрремĕнех пăхăнать. Кунашкал лару-тăрура ĕçлекене хавхалантарнă е явап тыттарнă чухне пуçлăх хăйне пăхăнса тăракана ытлашшипех «тав тăвасси» е айăпа кĕрсен те явап тыттармасăр хăварасси те часах. Çийĕнчен кладовщик – пурлăхшăн яваплă çын, çавна май шкул харпăрлăхĕпе усă курнă чух коррупци саманчĕсем пулма пултарасси те инçе мар. Анчах директор район администрацийĕн пуçлăхĕн ячĕпе тивĕçлĕ информаци яман.

Шел те, ку – районти пĕртен пĕр тĕслĕх мар. Темиçе вĕренÿ учрежденийĕнче администрацие хуçалăх персоналĕн должноçĕсенче çав учрежденисен ертÿçисен мăшăрĕсем е ытти çывăх çынни ĕçленине палăртнă. Ураскилт тата Питĕшкасси шкулĕсен директорĕсем вара делопроизводствăпа çыхăннă ĕçсене пурнăçланăшăн хăйсене хушса тÿленĕ.

Çавăн пекех чылай учреждение коррупцирен, правăна пăсасран сыхланмалли профилактика ĕçĕшĕн яваплă çынсене палăртман, тÿрĕ кăмăллă ĕç стандарчĕсемпе процедурисене хатĕрлемен, ĕçлекенсен этика кодексĕсене йышăнман, ытти çитменлĕх те пур.

Тĕрĕслев кăтартăвĕсене тĕпе хурса прокурор район администрацийĕн пуçлăхĕн тата асăннă вĕренÿ учрежденийĕсен ертÿçисен ячĕпе представленисем çырнă.

■ **Н.ДМИТРИЕВ**

Суд залĕнчен

# «Зебра» çинче урасăр юлнă

**_Шупашкар районĕн сучĕ 61 çулти Юрий Николаев тĕлĕшпе приговор палăртрĕ. Вăл, тĕп хулари коммерци организацийĕн автокранĕн водителĕ, Çырмапуç ялĕ çывăхĕнче çынна таптанă._**

Инкек кăçалхи çу уйăхĕн 23-мĕшĕнче каçхине пулнă. Автокранпа çула тухнă май Николаев асăннă ял патĕнчи общество транспорчĕн чарăнăвĕ çывăхĕнчи «зебра» умĕнче чарăннă автомобиль çине кĕрсе каяс мар тесе руле сылтăмалла пăрнă, çул айккине тухса кайса 64 çулти хĕрарăм, çул урлă каçнăскер, çине пырса кĕнĕ.

Йывăр суранланнă хĕрарăма Николаевăн ывăлĕсем, ашшĕ хыççăн автомашинăпа пынăскерсем, çийĕнчех больницăна леçнĕ. Унăн пурнăçне çăлса хăварма май килнĕ, анчах вăл урасăр юлнă.

Водитель хăйĕн айăпне туллин йышăннине кура ĕçе суд уйрăм йĕркепе тишкернĕ. Преступление квалификацилес тĕлĕшпе прокурор позицийĕпе килĕшнĕ май суд Николаевăн ирĕкне çулталăклăха виселлĕ тума йышăннă. Çавăн пекех унăн пĕр çуталăк транспорт хатĕрĕн рулĕ умне ларма юрамасть.

■ **Анатолий ИВАНОВ,**
**Шупашкар районĕн прокурорĕн çумĕ**

## Хушма кӑларӑм
# Хӳтлӗх

### Чун туртӑмӗ

# Аваллӑх управҫи

***…Сӑмах ҫӑмхи сӳтӗлнӗҫемӗн сӳтӗлет. Пурнӑҫ ҫулне аса илчӗ вӑл, ҫитӗнекен ӑрӑва ҫар ӗҫне вӗрентнине, 18 ҫул ялти вӑтам шкула ертсе пынине пӗлтерчӗ. "Музей директорӗ Ольга Меркурьева тивӗҫлӗ канӑва каяссине илтрӗм те сывлӑх чаплах маррине шута илсе унӑн вырӑнне куҫма шухӑшларӑм. Мӗншӗн тетӗр-и? Чун туртнипе, чӗре хушнипе. Ку музее йӗркеленӗ чухне, иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсен вӗҫӗнче, шкул директорӗнче ӗҫлеттӗм. Кашни пӳлӗме, стенда майлаштарма хутшӑннӑ, мӗн пур материал аллӑм витӗр тухнӑ. Вӗсене пухса хатӗрлеме вӗрентекенсемпе вӗренекенсене хутшӑнтарнӑ. Тӑван тӑрӑхӑн иртнӗ кун-ҫулӗпе интересленекенсем, аслӑ ӑру ҫыннисем хӑйсем усӑ курнӑ япаласене – историшӗн уйрӑмах пӗлтерӗшлисене тата ентешсен пурнӑҫне сӑнлаканскерсене кунта килсе пачӗҫ. Августа Спиридонова, Никита Сверчков ӳнерҫӗсем, Алексей Майраслов скульптор тата ытти ентеш хӑйсен ӗҫӗсене парнелерӗҫ. СССР халӑх артисткин Вера Кузьминан гипсран ӑсталанӑ бюсчӗ те кунтах", – калаҫӑва малалла тӑсрӗ Владимир Васильевич.***



*• Владимир Васильевич Петров куракансене ҫӗнӗ экспонатпа паллаштарать.*

### Сывлӑшӗ те кунта сиплӗ…

Чӑн та, Енӗш Нӑрваш тӑрӑхӗ пултарулӑх ҫыннисемпе пуян: Хумма Ҫеменӗ, Степан Максимов, Моисей Спиридонов, Павел Меркурьев, Никита Сверчков, Вера Кузьмина, Дмитрий Данилов, Алексей Майраслов, Василий Кузьмин тата ыттисем. Тӑван енӗн сиплӗ сывлӑшӗ, тӑрна куҫӗ евӗр таса та тӑрӑ шывӗ пултарулӑха аталантарма вӑй панӑ пулинех. Ахальтен-и вӗсен ячӗ-шывӗ республикипе кӑна мар, ҫӗршывӗпе сарӑлнӑ, ӑсталӑхӗ тӗнчене тӗлӗнтернӗ. Тӑван ялӑн музейне пуянлатмашкӑн вӗсенчен кашниех сумлӑ тӳпе хывнӑ: паллӑ ӗҫӗсене ӑна парнеленӗ. Паллах, асӑнмалӑх тата ентешӗсене савӑнмалӑх тата хӑнасене савӑнтармалӑх. Ҫакна килен-каян тивӗҫлипе хаклать.

Халӑх пуянлӑхӗн управӗнче пӗтӗмпе сакӑр пӳлӗм усӑ, вӗсенче тӑван ял, шкул, пӗрлешӳллӗ хуҫалӑх, ҫар мухтавӗ, Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫи вут-ҫулӑмӗ витӗр тухнӑ Енӗш Нӑрвашсен паттӑрлӑхӗ сӑнланнӑ. Курав ирттермешкӗн ятарлӑ вырӑн уйӑрнӑ, вӑл аслӑ та ҫутӑ: кунта чуна уҫса калаҫма та, паллӑ ҫынсен сӑмахӗсене ӑша хывма та меллӗ.

Енӗш Нӑрваш кун-ҫулӗнче тӑван халӑха ҫутта кӑларассишӗн хыпса ҫуннӑ Иван Яковлев тарӑн йӗр хӑварнӑ. Владимир Васильевич палӑртнӑ тӑрӑх – Иван Яковлевич яла вун икӗ хут килсе кайнӑ: чи малтан 1879 ҫулта – шкул ҫурчӗ тумашкӑн ҫӗр уйӑрса памашкӑн ыйтма. Ун чухне вӑл хӑйӗнпе курнӑҫма пуханнӑ арсене пурне те туслӑн алӑ тытса саламланӑ теҫҫӗ. Шӑпах ҫакӑнпа тыткӑнланӑ пулмалла ял халӑхне. Вӗсем ачасене ҫутта кӑларасси ҫинчен калаҫнӑ.

10 теҫетке ҫӗр уйӑрса пани ҫителӗксӗр пулнӑ-ха, унсӑр пуҫне укҫа пухмалла, вӑрмантан йывӑҫ кӑлармалла, чул пуҫтармалла, кирпӗч илсе килмелле тата ытти те. Пӗрлехи вӑйпа пӗлӳ ҫуртне хута ямашкӑн хал ҫитернӗ. Сӑмах май, ӑна уҫнӑранпа кӑҫал 144 ҫул ҫитрӗ.

Иртнӗ ӗмӗрӗн 90-мӗш ҫулӗсенче ялта халыхи йышши ҫӗнӗ шкул ҫурчӗ ҫӗкленсен киввинче музей уҫнӑ. Мачча ҫӳллипе сывлӑш выляса тӑнӑ май экспонатсем лайӑх упраннине палӑртать директор.

Тӗпчемелли, курмалли нумай ҫӗре ҫынсем уйрӑмах туртӑнаҫҫӗ – музейран халӑх таталма пӗлмест. Районти шкулсенче вӗренекенсем час-часах пулаҫҫӗ, тӑван ен историйӗпе интересленеҫҫӗ. Кӳршӗллӗ районсенчен, Канаш, Шупашкар хулисенчен пысӑк ушкӑнсем килеҫҫӗ, кашни стенд умӗнче чарӑнса тӑраҫҫӗ, Тӑвай енӗн пултарулла ҫыннисемпе, ӳнерҫӗсен, скульпторсен ӗҫӗсемпе кӑсӑкланаҫҫӗ. Арҫын ачасене Ҫар Мухтавӗн пӳлӗмӗ ытларах илӗртет. Иван Яковлев парнийӗсем – класс хӑми, этажерка тата ытти – пирки пӗлесшӗн ҫунакан та сахал мар. Ҫутта кӑлараканӑн Юрий Ксенофонтов парнеленӗ бюсчӗ те хаклӑ экспонатсенчен пӗри.

Владимир Васильевич пек пуян чунлӑ та хӑйсен ӗҫне чунтан парӑннӑ ҫынсем ҫинче тытӑнса тӑраҫҫӗ, ҫулсерен пуянланаҫҫӗ пирӗн музейсем. Унӑн кун-ҫулӗ тӑван енпе тачӑ ҫыхӑннӑ. Вӑтам шкул хыҫҫӑн Канашри педучилищӗре физкультура уйрӑмӗнче вӗреннӗ. Ҫав вӑхӑтрах ҫар хӗсметне Германире пурнӑҫлама пултарнӑ. 1971 ҫулта диплом илсен Тӗмер шкулӗнче вӗрентнӗ. Икӗ ҫултан тӑван яла таврӑннӑ, ҫамрӑксене ҫар ӗҫне хӑнӑхтарнӑ, физкультура урокӗсене ертсе пынӑ. Пултарулӑхне кура каярахпа шкул тилхепине шанса панӑ Владимир Петрова. Унӑн педагогика стажӗ 39 ҫулпа танлашать. 2002 ҫултанпа – музей ертӳҫи.

"Мӗнпе тыткӑнларӗ-ха сире ҫак ӗҫ? Шалӑвӗ ҫав тери пысӑк-и? – ыйтмасӑр чӑтаймарӑм унран.

### Вӑл хӑй те – яланах шыравра

"Укҫи тарама-ха, чун ҫакӑнталлах туртать, хам ӗҫе курас, ӑна малалла аталантарас килет. Несӗлӗмӗрсен ламран лама куҫакан иксӗлми пуянлӑхне ҫамрӑк ӑру валли упраса хӑвармалла пирӗн", – тет вӑл.

Юлашки вӑхӑтра Владимир Васильевич тӗпчевӗ ӗҫӗсемпе интересленет. Тӗрӗссипе, шкула ертсе пынӑ ҫулсенчех унӑн 125 ҫулхи юбилейне халалласа брошюра кӑларнӑччӗ. Пӗлтӗр Енӗш Нӑрваш ялне никӗсленӗренпе 450 ҫул ҫитнине халалланӑ кӗнеке хатӗрлерӗ.

Халӗ вара Тӑван ҫӗр-шывӑн Аслӑ вӑрҫинче тухса кайнӑ ентешсем – ҫапӑҫу хирӗнче паттӑрлӑх кӑтартса пуҫ хунисем, аманса таврӑннипе е чире кайнипе вӑхӑтсӑр ҫӗре кӗнисем тата паян пурӑнакансем – пирки материал пухать. Районти 10 ял тӑрӑхӗнчи ветерансене халалласа Аслӑ Ҫӗнтерӳ 70 ҫул тултарнӑ ятпа ятарлӑ кӗнеке кӑларма палӑртнӑ. Ӑна хатӗрлесе ҫитернӗпе пӗрех: ӗҫ ушкӑнӗнче пӑхса тухса тивӗҫлипе хакланӑ.

Тепӗр туртӑм та пур унӑн: вырӑнти артистсемпе пӗрле спектакльсем лартмашкӑн паян кунччен хутшӑнать. Ял халӑхне пултарулӑхӗпе пӗрре кӑна мар савӑнтарнӑ. Сцена ҫинче "Эльпуҫӗнчи Нарспи" пырать-и, "Кай, кай Ивана-и" е "Чӑн-чӑн юрату-и" – курма пынисем яланах кӑмӑллӑн кӗтсе илеҫҫӗ. Сӑмах май, халӑх театрӗн пултарулӑхне СССР халӑх артисчӗсем Вера Кузьмина тата Вера Васильева пысӑка хурса хакланӑ.

Владимир Петров кӑҫал "Шӑпа" спектакль ҫырса пӗтернӗ, тӗп роле хӑех калӑпласшӑн. Ҫӗнӗ ҫул умӗ тӗлне ӑна сцена ҫине кӑларма шухӑшлаҫҫӗ.

Ӗмӗчӗсем унӑн ҫутӑ та малашлӑхлӑ. Пултарулӑх ӗҫне хутшӑннипе пӗрлех музей пӗлтерӗшне татах ӳстерес тӗллевлӗ. Унӑн шухӑшӗпе – аваллӑх управҫин аталанмалла, ҫынсене ҫӗнӗ экспонатсемпе савӑнтармалла.

Музей ҫумӗнче йӗркеленӗ фольклор ушкӑнӗ кунта ирттерекен тӗрлӗ мероприятие хутшӑнать, программӑна пуянлатать тата халӑха илӗртет.

Ҫапла пурӑнать, самана уттипе тан пыма тӑрӑшать паян Тӑвай районӗнчи Енӗш Нӑрвашри информаципе культура центрӗн Владимир Петров пуҫарулӑ ертсе пыракан историпе мемориал музейӗ.

### Паттӑрлӑх урокӗсен витӗмӗ

Владимир Васильевичпа Таисия Ивановна – ялти ятлӑ-сумлӑ ҫынсем. Тӑватӑ ывӑлӗ хӑйсем пекех маттур та ӗҫчен, пилӗк мӑнукӗ ӑрӑва малалла тӑсать.

Владимир Петров шкулта ҫар ӗҫне тата физкультурӑна вӗрентнине ҫӳлерех асӑнтӑмӑр. Ҫамрӑк ӑру унӑн тӗслӗхӗпе спортпа туслашнӑ, патриот воспитанийӗ илсе ҫитӗннӗ. Ахальтен-и унӑн вӗренекенӗсен хушшинче кун-ҫулне ҫар службипе ҫыхӑнтарнисем йышлӑ. 20-ӗшӗ Афган вӑрҫин вут-ҫулӑмӗ витӗр тухнӑ, 13-шӗ Чечняри ҫар хирӗҫ тӑрӑвне хутшӑннӑ. Ҫар ӗҫӗ енӗпе тарӑн та ҫирӗп пӗлӳ панӑшӑн вӗсем аслӑ юлташне, хисеплӗ вӗрентекенне паян кун та тав тӑваҫҫӗ, хӑйсем чӗрӗ те сывӑ юлма пултарнине ҫакӑнпа ҫыхӑнтараҫҫӗ.

■ **Валентина СМИРНОВА.**
Тӑвай районӗ.
Сӑн ӳкерчӗкӗ авторӑн

### Сывлӑх сыхлавӗ

# "Мана пурнӑҫ парнелесем"

***Утӑ уйӑхӗн 9-15-мӗшӗсенче республикӑра "Мана пурнӑҫ парнелесем" информаципе ҫут ӗҫ акцийӗ иртет. Ӑна Социаллӑ тата культура пуҫарӑвӗсен фончӗ йӗркелет.***

Асӑннӑ мероприятие ҫак уйӑхӑн 8-мӗшӗнче паллӑ тӑвакан Ҫемье, юрату тата шанӑҫ кунне халалласҫӗ. Акци тӗллевӗ – хырӑм пӑрахас, ҫемье хаклавне тата ырӑ йӑли-йӗркине упраса хӑварас тӗлӗшпе общественноҫ тимлӗхне ӳстересси, ҫавӑн пекех хырӑм пӑрахассине чакарас тата профилактикӑлас тӗллевпе сывлӑх сыхлавӗн управленийӗн органӗсен, медицина, общество тата тӗн организацийӗсен вӑй-хӑватне пӗрлештересси.

Чӑваш Енре информацин тата вӗренӗвӗн чылай мероприятине, ҫак пулӑмӑн кӑмӑл-сипет тата этика тӗлӗшӗнчи сиенӗ ҫинчен реклама кампанийӗсем йӗркелеме палӑртнӑ. Вӗсенчен уйрӑмах пӗлтерӗшли – ҫут тӗнчене ҫӗнӗ кайӑк илсе килнӗ ҫамрӑк амӑшӗсемпе Президентӑн перинаталь центрӗнче ирткен тӗл пулу. Унта темиҫе ҫул каялла хырӑм пӑрахас ыйтупа тухтӑр патне пынӑ, анчах вӑл ҫине тӑнипе шухӑша улӑштарса чӗре айӗнче тӗвӗленнӗ чуна пурнӑҫ парнеленӗ амӑшӗсемпе ачисене йыхравлаҫҫӗ. Вӗсем пухӑннисене хӑйсен кунҫулӗпе паллаштарӗҫ, тӗпренчӗкне ҫут тӗнче парнеленин пархатарлӑхӗ ҫинчен ӑнлантарса парӗҫ.

Мероприятисенчен тепри – "Хырӑм пӑрахтармасӑр иртнӗ эрне" акци. Ун чухне Президентӑн перинаталь центрӗн тухтӑрӗсем асӑннӑ ыйтупа никама та йышӑнмӗҫ, ҫуралман пурнӑҫа вӑхӑтсӑр татнин сиенӗ ҫинчен специалистсем лекцисем вулӗҫ, ҫул ҫитмен ҫамрӑксен ҫуллахи канӑвӗн тата сиплевӗн организацийӗсенче калаҫусем ирттерӗҫ.

Хырӑм пӑрахассине саккун йӗркипе чарасси мар, кашни тӗпренчӗк юратура ҫурални, вӑл кӗтнӗ ача пулса ҫут тӗнчене килни пӗлтерӗшлӗ. Пӗчӗкскерсен пурнӑҫне тата хӗрарӑмсен сывлӑхне упрассишӗн пыракан кӗрешӳре обществӑн мӗн пур майпа туллин усӑ курмалла.

• ➡ 6, 11, 12 стр.

Хÿтлĕх

# Пулăшма васкăр

«Хĕрлĕ Хĕрес» организацин республикăри уйрăмĕ ентешсене «Ырă тума васкăр» программăна хутшăнса пирĕн тăрăха Украинăран тарса килнисене социаллă хÿтлĕхе илме чĕнсе калать.

Чи малтанах вĕсене гигиена хатĕрĕ, тумтир, атă-пушмак, чылай вăхăтлăх упрама юрăхлă апат-çимĕç çитмест. Тăван çĕр-шывран ирĕксĕр тухса кайма тивнисен хушшинче ачасем йышлă пулнă май тетте те ытлашши мар.

Аса илтеретпĕр: инкеке лекнисем валли çавăн пекех вырăн таврашĕ, ал шăлли, çÿхе утиял, ача-пăча кĕнеки, шкул хатĕрĕ, кĕсье телефонĕ, радиоприемник, савăт-сапа, медикамент /суран çыхмалли материал, шприц, вируса хирĕç кĕрешмелли антибиотик/, шăрпăк, çурта кирлĕ.

Гуманитари пулăшăвне Шупашкар хулинчи Трактор тăвакансен проспектĕнчи 45 çуртăн 109-мĕш пÿлĕмĕнче йышăнаççĕ. Телефонсем: 8/8352/ 20-32-38, 79063642220.

Çавăн пекех расчет счечĕ çине укçа куçарма юрать, «тÿлев тĕллевĕ» йĕркере «Украинăран тарса килнисене пулăшма» тесе паллă тумалла. «Раççей Хĕрлĕ Хĕрес» организацийĕн Чăваш Республикинчи уйрăмĕн реквизичĕсем:

428032, г. Чебоксары, ул. Ленинградская, д. 31
р/с 40703810300000007610
в АКБ Чувашкредитпромбанк ОАО г. Чебоксары;
к/с 30101810200000000725
БИК 049706725, ОКПО 02940061, ОКОНХ 98600
КПП 213001001, ИНН 2128010013



# Çăлăнăç утравĕ

Йывăр шăпаллă çынсене патшалăх хăй хÿттине илет. Ку енĕпе ятарлă тытăм туса хунă: социаллă пулăшу учрежденийĕсем йĕркеленĕ, ветерансен çурчĕсемпе интернатсем ĕçлеççĕ.

Раççейри «Хĕрлĕ Хĕрес» организацин Чăваш Енри уйрăмĕ те хăйĕн ĕç-хĕлне сăваплăхпа çыхăнтарнă, вăл та ыр кăмăллăха кÿлĕннĕ. Тĕрĕссипе, ку тытăм пуçарулă çынсен чун хавалĕпе тата ентешсем ыр кăмăллăх валли хăйсен ирĕкĕпе хывнă взноссемпе тытăнса тăрать. Укçа-тенкĕ шутлă пулнине пăхмасăр социаллă тĕлĕшĕнчен йывăр шăпаллă çынсене – пĕччен пурăнакансене, ватăсене, инвалидсене, тăлăх ачасене, йышлă çемьесене, ытти вырăнтан тарса килме тивнисене, тĕлли-паллисĕр çапкаланса çÿрекен çул çитмен çамрăксене, çут çанталăк пулăмĕнче, аварипе катастрофăра инкеке лекнисене – витĕмлĕ пулăшу парать.

«Хĕрлĕ Хĕрес» организаци çумĕнче «Пациентсен шкулĕ» /ăна ВИЧ чирĕпе нушаланакансем, наркомансем тата пенитенциар заведенийĕсенче тĕпленнисем валли уçнă/, «Ыр кăмăллăх служби» /ĕçлеме пултарайман ватăсем, инвалидсем, тăлăх ачасем, салтак арăмĕсем, тарса килнисем валли/, «Медицинăпа социаллă пулăшу клубĕ» йĕркеленĕ.

«Вĕсем те çынсемех» программăна хута янă, унăн тĕллевĕ – тĕлли-паллисĕр çапкаланса çÿрекенсене пулăшасси. Социаллă адаптаци центрне вĕсем валли тумтир, атă-пушмак, вырăн таврашĕ пухса параççĕ. «Шкул ачисене социаллă воспитани парасси» программăпа килĕшÿллĕн çул çитмен çамрăксене социаллă хаклавне ăша хывас тата сывă пурнăç йĕркине хăнăхтарас енĕпе тивĕçлĕ воспитани парассишĕн тăрăшаççĕ. «Право пулăшăвĕ», «Донорлăха пропагандăласси» клубсене çÿрекенсем йышлă. Унсăр пуçне «Килте пăхса усрассин никĕсĕ», «Пĕрремĕш пулăшу», «Килти медсестра», «Пĕтĕм тĕнчери гуманитари прави» темăсемпе лекцисем ирттереççĕ. Хÿтлĕхсĕр çынсене пулăшмашкăн «Япала пухакан центр» уçнă.

Иртнĕ çулхи нарăс уйăхĕнче Чăваш Ен Халăха ĕçпе тивĕçтерекен патшалăх службипе пĕрле «Чирлисене пăхакансен служби» йĕркеленĕ, пĕрремĕш ушкăна «Килте пăхасси» курсран вĕрентсе кăларнă.

«Хĕрлĕ Хĕрес» организацин уйрăмĕ Шупашкар хулинчи социаллă учрежденисемпе çыхăнса ĕçлет. Тĕслĕхрен, Калинин районĕнчи Çемьепе ачасене социаллă пулăшу паракан центра – канцеляри таварĕпе, Мускав районĕнчи реабилитаци центрне çырмалли хатĕрсемпе, япалапа тивĕçтереççĕ.

*Мĕнле пурăнатăн, ветеран?*

# «Тавах сире ырра вĕрентнĕшĕн»



• София Парикова ветеран.

Ачалăхĕ паян кун та асĕнчен тухмасть унăн. Тăлăха юлнăскерĕн кунçулĕ çăмăл пулман. «Çичĕ класс вĕренсе тухрăм. Учительсем пулăшнипе кăна, манăн нимĕн те пулман: тăхăнмалли те, çимелли те. Пĕчĕк пÿртре пурăнаттăм. Учительсем хĕрхенсе çур чĕлĕ çăкăр паратчĕç – вĕсен хăйсен те çимелли пулман ун чухне. Киле таврăнсан ĕлĕк чуста çăрнă кункăрана çĕçĕпе хырса шыва ярса вĕрететтĕм те çăра шыва ĕçсе чĕре сури тăваттăм. Çапла тытăнкаласа тăтăм. Пускилсем хушăран уйран паркалатчĕç. Çĕрле уйăх çутипе вăрмана çунашкапа вутшанкă пухма çÿренĕ. Пĕр хут кÿрсе килни икĕ куна çитетчĕ. Çу кунĕсенче аптрасах кайман-ха: вĕлтĕрен, писен, мăян, улма çеçки ярса яшка пĕçернĕ», – тет София Гавриловна.

Шкулта лайăх вĕреннĕ вăл. Учительсем çĕнĕ темăна ăнлантарса пĕтернĕ кăна – хĕр ача тÿрех хуравлама пултарнă. Ăслă юлташĕсен тĕрлĕ сăлтавпа урок ирттерме май килмесен хăйсен вырăнне Софийăна шанчăклăнах хăварнă. Малалла вĕренес шухăшĕ, паллах, пысăк пулнă унăн. Анчах çитмен пурнăç, тăлăх-турат шăпи çутă ĕмĕте пурнăçа кĕртмешкĕн кансĕрленĕ.

Шкул пĕтерсенех хăй пекех тăлăххăн çитĕнекен Валентина Казначеевăпа иккĕшне Кăкшăма вăрман касмашкăн чылай аслă çынсемпе янă. Хырăм выççине, сивĕ витĕр каснине пăхмасăр пĕтĕм йывăрлăха тÿссе ирттернă 13 çулти хĕр ачасем.

Çав çулах Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи пуçланнă. Вăй питти арçынсем пурте фронта тухса кайнă. Колхозра ватă-вĕтĕ тата хĕрарăмсем кăна юлнă. Вĕсем тыр-пул акнă, пухса кĕртнĕ, фронта тăрантарассишĕн-тумлантарассишĕн, Çĕнтерĕве çывхартассишĕн хăйсене хĕрхенмесĕр нушаланнă. Çичĕ класс пĕтернĕ Софийăна хутла пĕлет тесе «Волга» колхозăн икĕ бригадин кладовщикне лартнă. Хиртен кĕнĕ тырра тасатса чи малтанах фронта ăсатнă, юлнă пеккине амбара турттарнă. Йывăр михĕсене вăй илсе тĕреклеенеймен арçын ачасемпе хĕр ачасем йăтнă, çамрăклах хуçăлнă. «Ун чухне миçе тонна йăтнă-ши? – шучĕ те пулас çук. Выçă çынсене ĕçлеттерес тесен малтан çитермелле пулнă. Хам çамрăккине пăхмасăр ĕç-пуçа йĕркелесе пыма пултарнă. Пĕррехинче кÿршĕ хуçалăхран 3 центнер тырă турттарса килсе çăнăх авăртрăмăр, колхоз ĕçне тухакансене çăкăр пĕçерсе çитертĕмĕр. Кăнтăр апачĕ вăхăтĕнче 300 грамм çăкăр тата вика çăнăхĕнчен пĕçернĕ пĕрер çăмах валеçсе параттăмăр. Çавна май çынсем ĕçе йышлăн тухатчĕç. Вăрçă çулĕсенче хуçалăх ертÿçисем тăтăшах улшăнатчĕç. Мана çамрăк тесе улталас текен те пулчĕ, анчах нуша кулач çитерет тенĕ евĕр ырăпа усала аванах уйăраттăм. Пĕрлешÿллĕ хуçалăх пурлăхне сыхласа хăварассишĕн çине тăнă», – тет тыл ветеранĕ.

Ун чухне çамрăк хĕрĕн аллинче ĕç вĕренĕ кăна. Кунĕпе колхозра тар тăкнине пăхмасăр киле таврăнсан тĕрĕ тĕрленĕ, алсиш-чăлха çыхнă. Çĕвĕç ăсталăхне те туптама тивнĕ: икĕ бригада халăхне килте тĕртнĕ пиртен кĕпе-йĕм майлаштарса панă. Çĕвĕ машинине Софийăна пускил хĕрарăмĕ парнеленĕ. Сăмах май, унпа кинемей паян кунччченех усă курать.

Вăл ÿснĕ вăхăтра самана чăннипех йывăр пулнине пытармасть София Гавриловна: ашшĕ-амăшĕ çывăрса пурăннă тÿшек-минтере, утияла налук шучĕпе тăпăлтарса кайнă. Тăлăх валли нимĕн те хăварман.

Вăрçă хыççăн та пурнăç çăмăлланман. Ял çынни алăра укçа тытса курман. Кĕпе-йĕме кĕл тăррипе çуса тасатнă. Пурнăç хĕсĕнсех çитсен хĕрарăм республика шайĕнчи пĕр депутата хăйĕн терчĕ-нуши пирки пĕлтерсе çыру янă. Палламан хĕрарăма хĕрхеннĕ лешĕ, унăн ячĕпе 50 тенкĕ ярса панă. Çакна София Парикова ĕмĕрне те манас çуккине пĕлтерчĕ. Унăн шухăшĕпе – çут тĕнчере ырă çынсем пĕтмен-ха, çавăнпа та шанăçпа пурăнать вăл.

Хĕр шутне кĕрсен хăй пекех тăлăххăн ÿснĕ каччăпа çемье çавăрнă София, пилĕк ача çуратнă. Шел те, иккĕшĕн пурнăçĕ йывăр чире пула пĕчĕклех татăлнă. Виçĕ ывăлне вара тĕрĕс-тĕкел çитĕнтерсе салтака юрăхлă тунă.

Тăхăр мăнук паян унăн, кĕçĕн мăнукĕсем çиччĕн.Вĕсемпе савăнса пурăнать ветеран, хăй çамрăк чухне телей курманран вĕсене тулăх та тулли пурнăç сунать.

Мĕн ас тăвассах ĕçре вăл. Урăхла май та килмен. Шăпине хăй туптанă, пурнăç çулне хывнă. Тивĕçлĕ кану ÿсĕмне çитсен те кĕрĕк арки йăваласа ларман, республика больницисенчен пĕринче 70 çула çитиччен тăрăшнă.

87 çула кайнă ветеран халĕ Шомик ялĕнче пурăнать. София Парикова чăваш халăх хаçачĕпе чылайранпа çыхăну тытать. Унăн кашни номерне юратса вулать. «Пирĕн урамра 20 кил кăна. «Хыпарпа» «Сывлăха» çырăнса илекенсем иккĕн. Эпĕ вара «Хыпар» Издательство çурчĕн пилĕк кăларăмне илсе тăратăп. Куç хупăниччен те хаçатран уйрăлас марччĕ, – пытармасть ветеран. – Сирĕн кăларăмсене вулама тытăннăранпа пурнăçа урăхларах хаклама пуçларăм. Вăл илемлĕреххĕн, çутăраххăн курăнма тытăнчĕ. Эсир пурришĕн савăнатăп. Тавах сире атте-анне пек пулса ырра вĕрентнĕшĕн».

# Отчет йышăнаççĕ

РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕ пĕлтернĕ тăрăх – ĕçпе тивĕçтерекенсен обязательнăй пенси тата медицина страхованийĕсем валли шутласа панă тата куçарнă взноссем тăрăх çурла уйăхĕн 15-мĕшĕччен отчет памалла.

Пирĕн республикăра çакăн çинчен çынсене тара тытса ĕçлеттерекен, çав шутра финанспа хуçалăх ĕçĕ-хĕлне тытса пыракан 24 пин страхователĕн пĕлтермелле.

Отчетсене алă пуснине çирĕплетсе электрон мелĕпе Интернет урлă çыхăнăвăн хăрушсăрлăхпа тивĕçтернĕ каналĕпе йышăнаççĕ. Ăна çитерессипе çыхăннă информацие РФ Пенси фончĕн официаллă сайтĕнче «Регионти ĕçпе тивĕçтерекенсене тата предпринимательсене» пайра вырнаçтарнă.

«Тÿлевсĕн харпăр хăй пÿлĕмĕнче» кварталти отчетсене хатĕрлемелли тата тĕрĕссине палăртмалли тÿлевсĕр программа пур. Отчетсене вăхăтра тата йăнăшсăр çитерни пĕлтерĕшлĕ, мĕншĕн тесен вĕсене кая юлса парсан шутланă суммăн 5 процентĕпе танлашакан, анчах 1 пин тенкĕрен кая мар штраф тÿлеме тивет.

«Тÿлевсĕн харпăр хăй пÿлĕмĕпе» çыхăнмашкăн /chuvasch.ikp.pfrf.ru/ Пенси фончĕпе документсен электрон çаврăнăшĕ пирки килĕшÿ тунă ĕçпе тивĕçтерекенсем регистрациленмелли заявкăна Интернетпа çитерме пултараççĕ. Ытти чухне Пенси фончĕн хăвăр учета тăнă управленине заявлени памалла.

• ➡ 11, 12 стр.

*Пулăм*

# Ячĕ – халăх асĕнчех

***"Ырă çын вилсен ячĕ ĕмĕре юлать" текен каларăш пур. Андриян Григорьевичăн вилĕмсĕр ячĕ вара ăрусен асĕнче упранасси пирки иккĕленме кирлĕ мар. Вăл пирĕнтен уйрăлса кайнăранпа вунă çул çитнине асăнма Шуршăлти Космонавтика музейне республикăран та, унăн тулашĕнчен йышлăн пухăнни те çакна аван çирĕплетет. Ватти те, вĕтти те тăван халхăмăрăн мухтавлă ывăлне пуç тайма килнĕ. Ĕç коллективĕсем ушкăнпах çула тухнă. Çамрăк космонавтсен юхăмĕн хастарĕсен делегацийĕсем уйрăмах йышлăччĕ.***



Асăну митингне Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев уçрĕ. Вăл çапаталлă чăваш ывăлĕ чун çирĕплĕхĕпе, кăмăл туртăмĕпе, малашлăх ĕмĕчĕсемпе хавхаланса умри тĕллевсене пурнăçлама пултарнине, тĕнче шайĕнче палăрнине, çăлтăрсем таран çĕкленнине мăнаçланса палăртрĕ. Андриян Николаевăн тĕнче орбитинчи тĕлĕнтермĕш икĕ вĕçевĕ ун чухне те, халĕ те çамрăксемшĕн паттăрлăхăн ырă тĕслĕхĕ пулни, тĕпчев ĕçĕсем вара космонавтика наукине малалла кайма пулăшни çинчен каларĕ. Андриян Григорьевич тăван республикăн, çуралнă кĕтесĕн социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвне хывнă тӳпене хаклама та йывăр: вăл пулăшнипех соцкульт объекчĕсем çĕкленнĕ, çулсем хывăннă, заводсем продукци кăларма тытăннă, шкулсем хута кайнă тата ытти те. Ертӳçĕсем те, ахаль çынсем те пулăшу ыйтса ун патĕнче тăтăш пулнă: пĕр ыйтăва та хуравсăр хăварман, кашнинех пулăшма мехел çитернĕ.

Митингра тухса калакан нумай пулчĕ. Сĕнтĕрвăрри район администрацийĕн пуçлăхĕ Владимир Григорьев, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн депутачĕсем – Олимп чемпионки Елена Николаева, Александр Никоноров, ЧР культура министрĕн çумĕ Татьяна Казакова, Сĕнтĕрвăрри район пуçлăхĕ Владимир Морозов, "Байконур" космодром ветеранĕсем Евгений Южалин, Василий Прокопьев Совет Союзĕн виççĕмĕш космонавтне ăшшăн аса илчĕç, пуç тайрĕç.

Митинг вĕçленнĕ хыççăн пурте пĕрле Андриян Николаев вил тăпри çине чĕрĕ чечексем хучĕç. Асап тӳснĕ çветтуйсен Андрианпа Натали чиркĕвĕн настоятелĕ Георгий атте часавайра панихида ирттерчĕ.

Космонавтика музейĕ аталанать, пуянланать. Музей корпусĕн виççĕмĕш хутне çĕклеме, А.Г.Николаев космонавт ячĕллĕ сад территорине анлăлатма йышăннă. Реконструкци проекчĕпе республика ертӳлĕхĕ те, митинга хутшăннисем те кăсăкланса паллашрĕç. Тĕп корпус умĕнчи фонтана çĕнетĕç,



Совет тата Раççей космонавчĕсен сăнĕсене вырнаçтарĕç, Хĕвел тытăмĕнчи планетăсен макечĕсем пулĕç. Виççĕмĕш хутра, проектпа килĕшӳллĕн, – проекци тытăмĕллĕ тулли куполлă çăлтăр залĕ, интерактивлă тата астрономи класĕсем, телескоплă обсерватори пулмалла.

Ас тăвăм кунĕнче мемориал комплексĕн дирекцийĕ Уçă алăксен кунне ирттерчĕ, "Çăлтăрлă Кăйкăр" документлă фильм кăтартрĕ. "Вăрман юмахĕ" этнокультура лагерĕнче канакан диаспорăри чăваш ачисем хăйсен пултарулăхĕпе паллаштарчĕç.

■ **Юрий СТЕПАНОВ**

# Ырă юхăм сарăлать

***Эмел сутакан организацисен пĕр пайĕ аптекăра спирт хутăшĕллĕ сӳленккене, халăх сăмахлăхне кĕнĕ «фанфурика», харăсах темиçе сутма чарăннине ырлас килет.***

ЧР Экономика аталанăвĕн, суту-илӳ тата промышленноç министерствин, вырăнти хăй тытăмлăх органĕсен специалисчĕсем эмел сутакансен ертӳçисемпе тĕл пулса 50 мл тата ытларах асептика, катăркас курăкĕ, ытти ӳсен-тăран хушса хатĕрленĕ спирт хутăшĕн сӳленккисене сутма чарăнмашкăн ӳкĕте кĕртеççĕ. Фармацевтсем ăна нормăра пăхнинчен чылай нумайрах ĕçме май туса парса çĕр-çĕр çын сывлăхне начарлатнине, хăш-пĕрне вилĕм куçĕнчен пăхтарнине лайăх ăнланаççĕ. Министерствăпа администраци чиновникĕсемпе куçа-куçăн калаçнă чух пĕрер штук сутăпăр тесе сăмах параççĕ. Çак шухăш патне çитсе тухнă фармацевтсен ырă ĕçĕ сарăлать. Нумаях пулмасть аптекăсен Шупашкарти 17 организацийĕ килĕшĕве алă пуснă. Вĕсен тĕллевĕ – çынсен сывлăхне сыхласа хăварасси, асăннă спирт хутăшне медицина тĕллевĕн картĕнчен тухса ĕçме чарасси.

Ĕçке ярăннисен çывăх çыннисен эмел сутакан организацисен ертӳçисемпе тĕл пулса пĕр шухăш патне çитсе тухнă Шупашкар хула, Ленин районĕн администрацийĕсен специалисчĕсемпе депутачĕсене тав тумалла. Вĕсем çак ĕçе малалла тăсни савăнтарать. Иртнĕ эрнере эмел сутакан 4 организацире сӳленкке сутнине палăртнă. Ертӳçисемпе çак кунсенче хула администрацийĕнче тĕл пулаççĕ, вĕсене спирт хутăшне пĕрерĕн сутма сĕнеççĕ.

Вăрнарта –15, Çĕрпӳре – 6, Улатăрта – 1 /пурĕ 4 аптека/, Пăрачкавра – 28, Канашра – 24, Вăрмарта – 48, Комсомольскинче – 9, Елчĕкре 3 организаципе тата уйрăм предпринимательпе килĕшĕве алă пуснă.

■ **М.ЮРЬЕВ**

# Александр Проханов: "Чăвашсем – космос халăхĕ"

***Паллă писатель, общество ĕçченĕ, политика деятелĕ кăçалхи çĕртме уйăхĕн 30-мĕшĕнче Вырăс радион "Без вопросов" программине хутшăннă. Унта Александр Андреевич кăларăм ертӳçин Сергей Королевăн ыйтăвĕсене хуравланă. Сăмах тĕнчери лару-тăру, çавăн пекех Украинăпа çыхăннисем пирки те, пынă. Сергей Королев вара писатель тин çеç Чăваш Енрен таврăннине те шута илнĕ, унпа çыхăннă ыйтусем те панă.***

**С.Королев: Айтăр-ха Шупашкара таврăнар. Мĕн канăççăрлантарать унта пурăнакансене? Эсир Украина тетĕр. Унта та çакăн пекех тавлашусем-и е Мускавра калаканнисенчен урăхларах-и?**

**А.Проханов:** Паллах, вĕсене Донбасра пирĕн çынсене вĕлерни тарăхтарать. Шупашкар – тĕленмелле вырăн. Атăлçи цивилизацийĕ пурри пирки эпĕ маларах каларăм-ха. Кунта тĕрĕксем те, финн-угорсем те, вырăссем те, пĕчĕк йышлă ытти халăх та пурăнаççĕ. Кунта – православи тĕнне ĕненекенсем те, мăсăльмансем те, вута пуç таякансем те, язычниксем те, питĕ нумай юхăм. Халăхсен çак пĕрлешĕвне вырăссен аслă юхан шывĕ Атăл ытамласа тăрать, вăл çав халăхсен пурнăçне килĕшӳлĕх кӳрет. Халăхсен симфонийĕ вырăс патшалăхĕ çинче никĕсленнĕ.

**С.Королев: Паян мĕнлерех янăрать çак симфони?**



**А.Проханов:** Эпĕ унта чăваш ахахмерченĕ мĕнлине курма пырса çитрĕм. Вăл тĕлĕнмелле тĕнче, чăваш тĕнчи. Пĕр енчен, эпĕ паянхи чăваш интеллигенчĕсем хăйсен тарăн тымарне шыранине, хăйсен çут тĕнчене килнин вăрттăнлăхне пĕлме ăнтăлнине курса ĕнентĕм. Ӳнер галерейинче эпĕ çамрăк художниксем ăсталанă асамсемпе килентĕм, вĕсем чăваш халăхĕшĕн чун апачĕ вырăнĕнче. Тепĕр енчен, паянхи Чăваш Ен – малашлăха ăнтăлакан республика. Эпĕ приборсем тăвакан завода çитсе куртăм, унта тĕлĕнмелле кăткăс электроника хатĕрлеççĕ, вĕсене пиллĕкмĕш ăрури истребительсене, карапсене, çар киммисене, авиаципе вертолетсене вырнаçтараççĕ. Çак çĕнĕ электроника пуласлăхпа çыхăннă. Шупашкарти трактор завочĕ, трактор тăвакан ытти заводпа танлаштарсан, çакскерсенчен хăшĕ тахçанах хупăннă, теприсем аран-аран çеç тытăнса тăраççĕ, малалла аталанать, пысăк бульдозерсем, тракторсем кăларать. Вĕсем Арктикăра, тĕнчери ытти çĕр-шывра ĕçлеççĕ. Мана республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев йышăнчĕ. Питĕ кăсăклă çын, чăн-чăн чăваш. Вăл мана республикăн экономика кăтартăвĕсем çинчен мар, туса илнĕ таварсем е тĕш-тырă мĕн чухлĕ акса хăварни пирки те мар, Чăваш Енре иккĕмĕш çул ĕнтĕ çуралакансем вилекенсенчен ытларах пулнине пĕлтерчĕ. Йывăр çын хĕрарăмсен фестивальне ирттереççĕ. Чăвашра хресченсем упранса юлнă. Эпĕ нумай çынлă ялсенче пулса куртăм, хресченсен çурчĕсене темиçе те кĕрсе тухрăм. Вĕсен хуçисем иртен пуçласа сĕм çĕрлеччен тар юхтарса выльăх-чĕрлĕх ĕрчетеççĕ. Вĕсем, тĕпрен илсен, çĕр ĕçĕпе пурăнаççĕ.

**С.Королев: Çак ĕççемпе пурăнмалăх укçа туса илес теççĕ-и?**

**А.Проханов:** Кусем – уйрăм çынсен хуçалăхĕсем. Капиталист пулма, кăшт тупăш илме, урăх çынна тара тытса ĕçлеттерме, комбайн е трактор туянма вĕсен укçа çитмест, анчах та ял хуçалăхĕнче ĕçлес тĕлĕшпе вĕсен вăй, кăмăл, юрату туллиех. Вĕсем – чăн-чăн ĕçченсем. Халăх хăйĕн тĕшшине упраса хăварнă. Чăвашсем - космос халăхĕ.

**С.Королев: Мĕн каласшăн эсир çакăнпа?**

**А.Проханов:** Çак халăхăн Христос тĕнне йышăниччен ĕненĕвĕ тата çут çанталăкпа тĕнче пирки шухăшлавĕ асамлă йывăçпа, çăлтăрсемпе çыхăннă. Тĕнчене вăл этем пурăнакан аслă тивлет пек йышăннă, ăна пулăшса, пăхса тăмаллине туйса тăнă. Ун хыççăн Христос тĕнĕ хуçаланма пуçланă. Православи те – космос тĕнĕ вĕт, çын чунне космоспа çыхăнтараканĕ. Христос – хĕвел тата космос юратăвĕ. Йывăç – культ – пантеистика, вăл православипе çыхăнура тăрать. Çакă пĕтĕмпех мана чăвашсем çинчен чун тĕлĕшĕнчен питĕ çутă тата ырă халăх пек шухăшлама май парать. Вăл мана 70 çул каялла вăрçă вăхăтĕнче Шупашкарта хăйĕн çемйине йышăнчĕ. Эпир эвакуацие килнĕччĕ. Виçĕ çула яхăн пурăнтăмăр унта. Кунтанах манăн атте фронта тухса кайрĕ те каялла таврăнаймарĕ. Эпĕ вĕсен юратăвĕн ытамĕнче пулнă.

*Тĕлĕнтермĕш*

# Пĕр тĕвĕре лайăхрах

***Çут çанталăк хăйĕн кăсăк ӳкерчĕкĕсемпе этеме пин-пин çул тĕлĕнтерне. Вĕсене халĕ те тĕл пулатпăр. Пĕрисем çумăр пĕлĕчĕ патнеллех кармашаççĕ, теприсем çĕрпе танах.***



Чăн та, пĕрешкел маррипе пĕр-пĕринчен уйрăлса тăраççĕ. Кашниех – Çĕр чăмăрĕн хусканăвĕ, хăйне евĕрлĕхĕ. Вăрттăнлăха тăна илме пĕр этем пурнăçĕ çитмест. Анчах ăна ăсласа илес килет.

Нумаях пулмасть Интернетра мана икĕ сăн ӳкерчĕк тыткăнларĕ. Пĕрремĕшĕнче – ватă юман. Сарлака вуллине ... велосипед варăннă. Тен, нумай çул каялла, вăл хунав чух, çумне такам тайăнтарса хăварнă. Иккĕшĕ хăвăрт туслашнă. Юман велосипеда айккине тĕртсе яман. Унăн хысми тимĕре çилĕм пек çыпăçнă. Вăрман культури этем транспортне хăйĕн тĕнчине яланлăхах йышăннă, турат хыççăн турат янă, тӳпенелле кармашнă, тĕрекленнĕ. Велосипед юмана хăваласа çитессишĕн çӳлелле нумай туртăнман. Педальне пусса çавăракан пулман. Вулă велосипеда çĕр çинче хăварман, пĕр метр ытла çĕкленĕ.

Пурнăçра та çавнашкал. Акă пĕр çын питĕ хастар, вăр-вар. Кермен пек çурт-йĕр çавăрнă, ял хуçалăхĕнче продукци туса илме техника хатĕрĕ туяннă. Выльăх чылай ĕрчетет. Çемйине тăрантма тупăш ытлашшипех илет. Унăн хуçалăхĕнче ялти вунă çын ытла ĕç вырăнĕ тупнă. Продукци туса илме пулăшнăшăн çынсене аван ĕç укçи тӳлет. Çапла пĕтĕмлетес килет: пĕр хулă хуçăлать, шăпăра авсан та хуçаймастăн. Çавăнпа республикăра тупăш куракан, производствăна аталантаракан мĕн пур харпăрлăхлă тытăм нумайрах пулмалла.

Иккĕмĕш ӳкерчĕке Шупашкарта тунă. Вăл – тирексен пурнăçĕнчен. Вулли нумай хутлă çурт умĕнчи карлăкран сĕвеннĕ. Тĕрев пуртан тирек кăкăрне каçăртнă. Тĕрекĕ те, ватлăхра ашшĕ-амăшне пăхса пурăнакан ывăлĕн çемйи пек, ăна çатăрласа тытнă. Çак тĕслĕх те пурнăçа аса илтерет. Ялта халĕ пĕччен пурăнакан ватă нумай. Чылайăшĕ пахча çимĕç акса, çĕр улми лартса хăвараймасть, апат пĕçерсе çиеймест, мунча хутса кĕреймест. Çапах та ырă çын çĕр-çĕр. Халсăрсене пулăшаççĕ. Ала паракана, хӳтлĕх кĕтекене вăхăтра асăрхамалла çеç. Шырама кӳршĕ яла каймалла мар. Тирек тĕрев кирлĕ тесе юнашар çурт картишне куçса ларман, хăйĕн çумĕнчех тупнă. Хăйĕншĕн çеç мар, ытти çыншăн та тăрăшакан çумĕнче пулăр.

■ **Наталия ТАФАЕВА,**
**вĕрентекен**

*Çĕнĕ кĕнеке*

# “Пĕр ӳкĕнӳсĕр, кĕвĕçӳсĕр...”

Патăрьел-Юхма тăрăхĕ пултаруллă çынсемпе пуян. Паллă ăсчах, тухтăр, художник, поэт-писатель нумай çуратса ӳстернĕ вăл. Вĕсен йышĕ çулран çул ӳссе пыни те савăнтарать. Чылайăшĕ тăван тăрăха манмасть, çитĕнекен ăру валли хамăрăн историе хут çине хывса кĕнекесем калăплать. Акă юлашки çулсенче кăна Н.Тельцовăн «Эпир – Пашьелсем», В.Салминăн «Село: человек на гребне реформ», И.Ильинăн «Тăван ен, тăван кĕтес, Сăкăт – тăван ялăм», А.Салминăн «Асрах-çке эс, тăван кĕтес», В.Яковлевăн «Пăла шывĕ хĕрринче», Л.Исхаковăн «Авылыбыз Чишма», Д.Конновăн «Юхма енчи Тăрăн ял тăрăхĕ» кĕнекисем кун çути курчĕç. Вĕсем пурте тăван ен кун-çулне çутатса параççĕ. Çак кунсенче çĕнĕ тепĕр "чун апачĕ" çуралчĕ. Мария Мадюковăн «Шурă-шурă чечексем...» сăвăсен пуххи пичетрен тухрĕ. Унăн презентацийĕ районти тĕп вулавăшра иртрĕ. Çак мероприятие поэзие юратакансен «Мехел» клуб членĕсем, районти чăваш чĕлхипе литературине вĕрентекенсем хутшăнчĕç. «Мехел» клуб ертӳçи Нина Мазякова кĕнеке авторĕн кун-çулĕпе паллаштарчĕ. Çавăн пекех Мария Ильинична шăп çак кунсенче 55 çул çул тултарнине палăртрĕ.

Сăвăçсем юбиляра халалласа хăйсем çырнă йĕркесене вуласа саламларĕç, ырлăх-телей сунчĕç. Мария Ильинична чăнахах та çак хисепе тивĕç çын, мĕншĕн тесен хăйĕн кун-çулне тĕрĕс йĕркелесе ирттерет.

Мария Ильинична Мадюкова – Патăрьел районĕнчи Çĕньялта 1959 çулхи çу уйăхĕн 18-мĕшĕнче çуралнă. 1974 çулта ялти сакăр çул вĕренмелли шкула пĕтернĕ. Унтан Турханти вăтам шкулта пĕлӳ пухнă. 1982 çулта И.Н.Ульянов ячĕллĕ Чăваш патшалăх университечĕн историпе филологи факультетĕнчен вĕренсе тухса чăваш чĕлхипе литература учителĕн дипломне илнĕ. 1977 çултанпа тăван шкулта ачасене пĕлӳ парать. Мария Ильинична – аслă категориллĕ учитель. Общество ĕçĕсене те хастар хутшăнать. «Илем» халăх фольклор ушкăнĕн членĕ. Пушă вăхăтра çыхма, тĕрлеме, çĕлеме юратать, сăвăсем хайлать.

Кĕнеке авторĕпе тĕплĕнрех паллашар-ха. Мĕн юратать-ха вăл?





**Тĕс** – кĕрен;
**чечек** – кĕл чечек, салтак тӳми;
**апат-симĕç:** турăхпа капăртма, салма яшки;
**кинофильм** - «Райские яблочки»;
**спектакль** - «Турă пӳрмен юрату»;
**юрăç** – В.Толкунова, В.Христофоров;
**юрă** – чăваш халăх юррисем;
**çыравçă** – С.Есенин, А.Артемьев;
**кĕнеке** – «Как закалялась сталь», «Хура çăкăр».

**Пурнăç чĕнĕвĕ:** «Пĕр ӳкĕнӳсĕр, пĕр кĕвĕçӳсĕр вĕренер, туссем, тасан пурăнма».

Мероприятие хутшăннисем Мария Мадюковăн «Шурă-шурă чечексем...» кĕнекине пысăк пахалăхлă тесе хакларĕç, автора малашне те чуна хумхантаракан сăвăсем çырма сунчĕç. Юбиляр тĕп вулавăша тата пухăннисене кашнинех çĕнĕ кĕнекине парнелерĕ.

■ **Н.ВАЗЮКОВА.**
Патăрьел районĕ

## Хӳтлĕх

*Ял историйĕ*

# Виçĕ Юнтапа

***Иртнисĕр малашлăх çук тетпĕр. Кашни ялăн – хăйĕн сăн-сăпачĕ, кун-çулĕ. Вăрнар районĕнчи Кушар, Уйкас, Хурапыр Юнтапа ялĕсен историне илес тĕк, вĕсем пирки никамах та çырман, тĕпчемен, интересленмен. Илья Степанов тавра пĕлӳçĕ район хаçатĕнче материал пичетлесе кăларнисĕр пуçне паллах.***

### Ĕмĕрсен ахрăмĕ

Кушар Юнтапа ячĕ архив документĕсенче XVI ĕмĕртен тĕл пулать. Вăл хальхи Элĕк районне кĕрекен Шуркасси Юнтапаран уйрăлса тухнă теççĕ. Çакă паллă: 1928 çулччченех ку ялсенче вилнисене Шуркасси Юнтапа çăвинче пытарнă. Ун хыççăн 3 ял хушшинче çĕнĕ çăва валли тĕне кĕмен чăваш масарĕнчен çур çухрăмра çĕр уйăрнă.

Уйкас /е Пасаркас/ тата Хурапыр Юнтапасене XVII ĕмĕрте Кушар Юнтапаран куçнă çынсем пуçарса янă иккен. 1859 çултан пуçласа XX ĕмĕрĕн çурри таранах Уйкас Юнтапара тунти кунсенче пасар пухăннă.

Çак ялсем тĕрлĕ вăхăтра Етĕрне уесĕнчи Асакасси вулăсне, Трак, Калинин, Красноармейски, Вăрнар районĕсене кĕнĕ.

Вĕсен çыннисем Тăван çĕр-шывăн пур пулăмне те хутшăннă. Тĕслĕхрен, 1670 çулта Степан Разин, 1774 çулта Емельян Пугачев ертсе пынă хресчен вăрçисенче хастар пулнă. Пугачев пăлхавне путарнă хыççăн ку тăрăхри халăха хăратас тесе çапăçусенче пуянсене хирĕç пулнă çынсенчен хăш-пĕрне çакса вĕлернĕ.

1842 çулхи çу уйăхĕн 16-мĕшĕнче Мăньял çывăхĕнче 6 пин хресчен сенĕк, пуртă, патак, çава тата ытти хатĕр йăтса, 400 çынлă çара хирĕç тухнă. Пăшаллă казаксене мĕнех тăвайнă-ши вĕсем? Хресченсем П.Киселев ирттерекен реформăна хирĕçленĕ, мĕншĕн тесен хĕсĕк анисене кастарса общество валли сухалама парасшăн пулман.

Пирĕн енчи халăха вара Тăван çĕр-шывăн 1812 çулхи вăрçин паттăрĕ, Кушар Юнтапа çынни Сидор Семенов ертсе кайнă. Тан мар çапăçура 14-шĕ йывăр аманнă, 3-шĕ вилнĕ, 400-ĕшне арестленĕ. Çакна хирĕç çу уйăхĕн 19-мĕшĕнче Муркаш районне кĕрекен Шурча тăрăхĕнче Етĕрне тата Козьмодемьянск уесĕсенчи 10 пин хресчен пăлхава тухнă. Ăна пăчлантарнă пулин те крепостла правăна пăрахăçлассине çывхартнă /ăна 1861 çулта пĕтернĕ/.

Сидор Семенов 1792 çулта Кушар Юнтапара çуралнă. 1812 çулхи утă уйăхĕн 29-мĕшĕнче 20 çулхи çамрăка патша çарне илнĕ, хĕсметре 26 çул тăнă. Киев гренадерĕсен полкĕн салтакĕ вăрçăра паттăрлăх кăтартнăшăн «Светтуй Анна» тата V степень «Вăрçăри çитĕнӳсемшĕн» паллăна, Парижа /1814 ç./ тата Варшавăна /1831 ç./ илнĕшĕн кĕмĕл медальсене тивĕçнĕ.

Шурча пăлхавне путарнă, чи хастаррисене тытса хупнă. Вĕсен шутĕнче Сидор Семенов та пулнă. Хусан кĕпĕрнаттăрĕ С.Шипов 1843 çулхи кăрлач уйăхĕн 13-мĕшĕнче çĕр-шывăн шалти ĕçсен министрне Сидор Симонов /Семенов/ пирки çапла пĕлтернĕ: «...Представляя на благоусмотрение Вашего высокопревосходительства, долгом поставляю присовокупить, что, принимая во внимание беспорочную службу рядового Симонова /Семенова/ я заключаю: лишить его знаков отличия за военное достоинство, серебряной медали и трех нашивок, наказать шпицрутенами через 500 человек один раз и как негодного по летам к крепостной работе отослать в Сибирь на поселение». Паттăрăн малашнехи шăпи паллă мар.

Хальхи вăхăтра çĕр-шыври пулăма тĕрлĕрен хакласçĕ. Çапах та пирĕн ялсен историйĕпе çыхăннине, тĕрлĕ вăхăтри паттăрсене ас тумалла, хакламалла, çамрăк ăру валли упраса хăвармалла.

### Вĕсене асра тытатпăр

Репресси çулĕсем темиçе тапхăрпа иртнĕ – 1920 çултан тытăнса 1980 çулччченех. Чи хăрушши 1937-1938 çулсенче пулнă. Ун чухне çирĕпрех хуçалăхсене пысăк налук тӳлеттернĕ. Хушăва пурнăçламан тесе кашнине тенĕ пек 2 çуллăха тĕрмене е 5 çуллăха каторгăна янă. Нумайăшĕ унтан таврăнайман. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче вĕсен таса ятне таврăнă тата 2 томлă кĕнекене кĕртнĕ.

Тăван çĕр-шывăн 1941-1945 çулсенчи Аслă вăрçине Кушар Юнтапа тăрăхĕнчен 193 çын кайнă, 129-шĕ çапăçу хирĕнче выртса юлнă. Кушар Юнтапари 77 çынран – 51-шĕ, Уйкас Юнтапари 64 çынран – 47-шĕ, Хурапыр Юнтапари 52 çынран – 31-шĕ таврăнайман.

Кушар Юнтапа ялĕнче халĕ Вениамин Прокопьев ветеран кăна юлнă. Валентин Лаврентьев нумаях пулмасть пирĕнтен яланлăхах уйрăлса кайрĕ. Уйкас Юнтапара – Василий Исаков, Хурапыр Юнтапара – Михаил Калошев кăна.

Паттăрла вилнисене те, сурансене пула уйрăлса кайнисене те, халĕ пурăнакан ветерансене те нихăçан та манмастпăр, асра тытатпăр.

Хальхи вăхăтра çак ялсем Ярмушка ял тăрăхне кĕреççĕ.

Шкулсем çинчен калас тăк Кушар Юнтапа çынни Иван Павлов, патша çарĕнчен таврăннăскер, ял халăхĕ хут пĕлменнипе, тĕттĕм пулнипе пăшăрханнăскер, 1893 çултах хăйĕн килĕнче ачасене вĕрентме тытăннă. Каярах вăл чиркӳпе прихут шкулĕ пулса тăнă. Кушар Юнтапари пуçламăш шкул Совет влаçĕн çулĕсенче уçăлнă. Ун чухне ачасене ытларах пуянрах çынсен çурчĕсенче Михаил Илларионов пĕлӳ панă. Каярах вăл Етĕрне уес ĕçтăвком председателĕнче, Чăваш Республикин суйлав комиссийĕн председателĕнче ĕçленĕ, Мускавра В.Ленинпа темиçе хут та тĕл пулнă. 1931 çулта кунта вăтам шкул уçăлнă, ăна малтан Николай Значков, каярахпа Лука Захаров ертсе пынă.

### Хисеплĕ çынсем

Çак тăрăхран хисепе тивĕçлĕ çын чылай тухнă: Александр Мажоров – пĕрремĕш комсомолец; Денис Леонтьев – малтанхи тракторист; Николай Исаков – паллă тимĕрçĕ; Кузьма Варламов – чаплă пахчаçă; Иван Перепелкин – Чăваш Республикин ял хуçалăхăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ; Зинон Шестаков – вăрçă ветеранĕ, çăм ată ăсти; Иван Шестаков – Атăл леш енчи торф предприятийĕн директорĕ пулнă, Василий Шестаков – ЧР тава тивĕçлĕ агрономĕ, ăсчах; Геннадий Иванов – районти /ун чухне – Калинин районĕ/ уполномоченнăйĕ.

Трифоновсен йăхĕнче те маттур çынсем сахал мар: Валентин Трифонов бригадир, Уйкас Юнтапари вăтам шкула ертсе пынă, Михаил Николаев ял хуçалăх пĕрлешĕвĕн ертӳçи, Петр Трифонов, Николай Леонтьев, Юрий Баранов – Раççей тава тивĕçлĕ донорĕсем.

Тăван ял çинчен материал пухнă чухне унăн шăпи, хуйхи-суйхи, çитĕнĕвĕ куç умне тухса тăчĕç. Ентешсем пĕтĕм йывăрлăха çĕнтерсе малалла талпăннă, ĕмĕтленнĕ.

Хальхи вăхăтра Кушар Юнтапа ял тăрăхĕнчи 343 хуçалăхра 709 çын пурăнать.

Юлашкинчен тĕлĕнмелле тепĕр çын – кӳршĕре пурăннă Ярмань мучи, Герман Шишкин – çинчен пĕлтерес килет. Маншăн вăл – ырă кăмăллă та пултаруллă ентешсенчен пĕри. Çакна каярахпа кăна туйса илтĕм. Ярмань мучи икĕ вăрçăра пулнă. Пĕрремĕш тĕнче вăрçинче тыткăна лекнĕ. Унта темиçе халăх çынни хушшинче пулса тутар, нимĕç, венгр чĕлхисене вĕреннĕ. Вырăсла малтанах пулленĕ ĕнтĕ. Эпĕ те ун хыççăн çав чĕлхесемпе кăсăкланаттăм. Ас тăватăп: чи малтанах вĕсемпе шут хисепне вĕрентрĕ. Сăмахсем халĕ те асăмрах, ĕçре те вĕсемпе усă куратăп. Атте каланă тăрăх /Ярмань мучи унран самаях аслă пулнă/ – çамрăк чухне вĕсем каççерен выртмана çӳренĕ. Хăш-пĕри лаша чуптарса ăмăртнă, Ярмань вара утсемпе тан пынă е хыçалтан чупса çитсе вĕсене утланнă.

Пултаруллă çынсем пирĕн таврара пулнă, пур, малашне те пулĕç. Эпир вĕсемпе тивĕçлипе мухтанатпăр.

Апла тăк ял пурăнать, унăн хастар çыннисем малашлăха талпăнаççĕ.

■ **Людмила КИРГИЗОВА-ШЕСТАКОВА.**
Вăрнар районĕ

*Ыйту-хурав*

# Хваттерти пая сутасси

***Муниципалитетăн пĕр пӳлĕмĕнчен теприне кĕмелли хваттерĕнче пурăнатпăр. Ăна 1991 çулта панă. Тара илекенсенчен эпĕ яваплi шутланатăп. Манăн ывăлпа аçа çурирен тăван шутланакан йăмăк та унта пропискӑра тăраççĕ. Йăмăк лицевой счета пайлаттарчĕ. Чикĕ леш енче тĕпленнĕскер хăйĕн пайне сутасшăн. Тĕрĕссипе, ку хваттерте вăл нихăçан та пурăнман. Ăна пропискăран кăларма пулать-и тата вăл хăйĕн пайне сутаять-и?***

Муниципалитет хваттерне е унăн пайне эсир те, йăмăкăр та сутма пултараймастăр. Çапла тăвас тесен ăна малтан приватизацилемелле. Унччен хваттер хуçи муниципалитет пулса тăрать. Йăмăкăрпа иксĕр вара – тара илекенсем, сирĕн унпа усă курмалли право кăна пур, сутма та, парнелеме те, халаллама та май килмест.

Йăмăкăра регистрацирен кăларма пулать: урăх вырăна пурăнма куçса кайнă май ăна пурăнмалли пӳлĕмпе усă курмалли ирĕкне çухатнă тесе суда тавăç тăратмалла. Муниципалитет хваттерĕнче пурăннă çын тепĕр вырăна куçсан социаллă найм килĕшĕвне вăл тухса кайнă кунран пăрахăçлаççĕ /РФ Пурăнмалли çурт-йĕр кодексĕн 83 статйин 3 пункчĕ/.

Судра сирĕн йăмăкăр кунта пулманни вăхăтлăх маррине /яланлăххине/ ĕнентерме – вăл чикĕ леш енче тĕпленнине, хваттерте пурăнманнине тата вăл ăна кирлĕ маррине, унта хăйĕн япалисене упраманнине, коммуналлă пулăшушăн тата тара тытнишĕн тӳлеменнине ăнлантарма – тивет.

Тавăçра йăмăкăр хваттерте пурăнманнине çирĕплетме пултаракан темиçе кӳнтелене – подъездри 2-3 кӳршĕне – кăтартăр.

Суд йăмăкăр пурăнмалли вырăнпа усă курмалли правăна çухатнă тесе йышăнать тĕк ăна регистрацирен кăлараççĕ. Ывăлăрпа иксĕр вара пĕртен пĕр тара илекенсем шутланатăр. Хваттере приватизацилеме йышăнсан вăл сирĕн пĕрлехи харпăрлăхăра куçать.

# Упăшкин пенсине – тăлăха юлнă арăмне

***Упăшка чĕре чирне пула кăçалхи ака уйăхĕн 6-мĕшĕнче вилчĕ, унăн пенсине вара пирĕн пата почтальон тепĕр икĕ кунран илсе пычĕ. Анчах та укçана мана памарĕ.***

Почтальон тĕрĕс тунă. РФ Пенси фончĕн тата РФ Ĕçлев министерствин 2004 çулхи нарăс уйăхĕн 16-мĕшĕнчи 15п/18-мĕш йышăнăвĕпе пенсие федераци почта çыхăнăвĕн организацийĕ урлă илсе çитернĕ чухне шутланă суммăна çын вилнĕ кун тата çак дата хыççăн пама юрамасть.

Çав укçана "Раççей Федерацийĕнчи ĕç пенсийĕсем çинчен" саккунăн 23 статйи тăрăх пенси органне тавăраççĕ тата çирĕплетнĕ йĕркепе тӳлеççĕ.

Упăшкипе вăл виличченех пĕрле пурăннă мăшăрĕ /çакна документпа çирĕплетмелле: пĕр адреспа пурăннине паспортра паллă туни тата ытти те кирлĕ/ çав пенсие илмешкĕн хĕрарăмăн мăшăрĕ пурнăçран уйрăлнăранпа 6 уйăх иртиччен /еткерлĕх документĕсем йĕркелемесĕр/ пенси органне кайса заявлени çырмалла.

# Темиçе справка пама юрать-и?

***Иртнĕ ĕмĕрĕн 90-мĕш çулĕсенче тĕрлĕ сăлтава пула ĕç вырăнне тăтăшах улăштарма тиврĕ. Пĕр организацирен теприне куçнă чухне вăраха кайнă тăхтав пулман. Тивĕçлĕ кану ӳсĕмĕ çывхарнă май Пенси фондне 60 уйăхри шалу пирки тĕрлĕ организацирен харăсах тăватă справка пама пултаратăп-и?***

Паллах, пултаратăр. Федерацин 2001 çулхи раштав уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 173-мĕш саккунĕпе килĕшӳллĕн пенси палăртмашкăн 60 уйăхри ĕç укçи пирки справка памалли вариант иккĕ таран.

1. 2000-2001 çулсемшĕн – Пенси фондĕнчи персонификаци учечĕн кăтартăвĕсем тăрăх. Ку мелпе çак тапхăрта Пенси фончĕн тытăмĕнче гражданин регистрациленнĕ тата предприяти уншăн уйрăм кăтарту парса тăнă пулсан усă курма пулать. Куçарнă суммăпа харпăр хăй лицевой счетĕнчен çырса илнинче паллашма май килет.

2. 2002 çулччченхи ĕç-хĕлĕн кирек хăш 60 уйăхри шалăвĕ çинчен архивра илнĕ е организаци панă справка. Кунашкаллине темиçе вырăнтан та пама юрать, организацисен хисепне чикĕлемен, вĕсем пĕр тăсăмпа тата ĕç кĕнекинче çырнă йĕркепе пыччăр кăна.

Пĕр вырăнтан теприне куçнă чухне вăраха кайнă тăхтав пулни-пулманни пенси шутласа панă чухне пĕлтерĕшлĕ мар.

# Хăçантан тӳлеме тытăнаççĕ?

***Мăшăр 2012 çулхи авăн уйăхĕнче çĕре кĕнĕ хыççăн ывăла тăрантарса пурăнакана çухатнăшăн пенси памалла турĕç. Çав укçана вăл 2013 çулхи çу уйăхĕн 1-мĕшĕнче илме тытăнчĕ. Тĕрлĕ сăлтава пула /аварие лекнипе чылай сипленме тиврĕ тата ытти те/ ăна йĕркелесси 7 уйăха яхăн тăсăлчĕ. Асăннă пенсие хăш кунран тӳлеме тытăнмалла?***

Тăрантарса пурăнакана çухатнипе пенсие тивĕçмешкĕн заявлени çырнипе пĕрлех пенси органне сирĕн ача çурални çинчен свидетельство, упăшкăр вилни çинчен свидетельство, упăшкăрăн ĕç стажĕ тата шалăвĕ çинчен справка /федерацин 2001 çулхи раштав уйăхĕн 17-мĕшĕнчи 173-мĕш саккунĕпе килĕшӳллĕн/ памалла пулнă. Енчен те çак документсене заявлени панă хыççăн 3 уйăх иртсен кăна çитернĕ тĕк ыйту тăрăх хирĕçле йышăну тăваççĕ. Çавна май пенси йĕркелессине тепĕр хут пуçăнма тивет. Вилнĕ çыннăн стажне çирĕплетекен документ пулмасан гражданин хăй килĕшнĕ тăрăх ăна социаллă пенсипе тивĕçтерме пултараççĕ /федерацин 2001 çулхи раштав уйăхĕн 15-мĕшĕнчи 166-мĕш саккунĕн 18 статйи тăрăх/.

Тăрантарса пурăнакана ĕç тата социаллă пенсисем палăртмалли вăхăт пĕрешкел мар. Ĕç пенсине çын вилнĕ хыççăн 12 уйăх иртиччен ыйтсан вăл пурнăçран уйрăлнă кунран тӳлеме тытăнаççĕ, çав вăхăт хыççăн – заявлени панă кунран шутласа 12 уйăх маларахринчен пуçласа, социаллă пенсие – ăна ыйтса çырнă заявление панă хыççăнхи уйăхăн 1-мĕш кунĕнчен.

• ➡ 12 стр.

Хӳтлӗх

*Апачӗ тутлă пултăр*

# Турам яшки

***Çуллахи шăрăхра турам яшкипе /окрошкăпа/ сăйланнине мӗнех çиттӗр. Ăна хатӗрлемешкӗн ансат. Чăннипех тутлă пултăр тесен хăшпӗр вăрттăнлăха усăмлатмалла кăна.***

Турам яшки – сивӗ апат. Çавăнпа пӗçернӗ какая е кăлпассие, çӗр улмине, çăмартана вӗттӗн тăваткалласа турамалла. Редиспа хăяра шултра терка витӗр кăлармалла – кун пек чухне вӗсем ытларах сӗткенленеççӗ тата апата техӗмлӗрех тăваççӗ.

Какай çусăр пулмалла, чи юрăхли – ӗне-выльăх ашӗ. Пӗçернӗ хыççăн ăна савăтран дуршлага кăларса хумалла – шывӗ сăрхăнтăр. Аша чӗлкеме урлă туса вакласан касăкӗ çемçерех пулать.

Чăннипе, турам яшкине аш яраççӗ, çапах та васканă чухне кăлпассипе усă курма юрать. Çусăр сортсем е сосиски илмелле.

Çӗр улмине тăпăрка тумалла: кастрюль тӗпне янă шывра виткӗчпе хупласа – тӗрӗссипе пăспа – 20-25 минут пӗçермелле, пиçни-пиçменнине пӗлмешкӗн çӗçӗ вӗçӗпе е вилкăпа тăрăнтарса тӗрӗслемелле.

Апата тутлăлăх кӗртмешкӗн пиçнӗ çăмарта саррине вилкăпа е



теркăпа вӗтетмелле те квaспа хутăштармалла.

Тутă кӗртекен ешӗл çимӗçе – укропа, симӗс сухана, пахча кӗпçине, базилика – тураса тăвар сапмалла, кашăкпа е тукмакпа пусарса вӗтетмелле – ырă шăршийӗ кирек кама та тыткăнлать.

Пылак е кăвасак квас суйласси сирӗнтен килет. Ăстасем типӗтнӗ ыраш çăкăрӗ хушса килте хатӗрленӗ кăвасак квас лайăхраххине палăртаççӗ. Чылайăшӗ заводра кăларнине кăмăллать. Сывă пурнăç йӗрки тытакансене квас вырăнне çусăртарах кефир илме сӗнетпӗр. Калори тӗлӗшӗнчен вăл чухăн тата пӳрене йывăрлăх кӳмест. Тути вара кваспа тунинчен пӗрре те кая мар.

Паллах, турам яшкине кăмăла кура вӗтетнӗ хӗрен, горчица е хура пăрăç /вӗтетнине/ хушма юрать. Çанталăх уйрăмах шăрăх чухне сивӗ апат ăшăнса каясран кашни порцие пăр катăкӗ яни ăна усăлтарать, техӗмлӗхне вăйлатать.

*Пурнăç ӳкерчӗкӗсем*

# Çӗрӗк çăкан усси çук

– Çăкан çӗрӗк тункатинчен усси çук, – тенине пӗрре кăна мар илнӗ Ваçук. Пӗлтерӗшӗ пирки малтан шухăшласах та кайман...

«Атте-анне вилсен пирӗншӗн тăван кил алăкӗ хупăнать», – терӗ пӗррехинче йăмăкӗ пиччӗшне.

– Ун пек пулас çук, пустуй ан калаç-ха. Шăллăм патне малтанхи пекех мунча кӗме, шӳрпе çиме çӳрӗпӗр, сӗтел хушшине ларса шăкăлтатса калаçăпăр, çывăх çыннăмăрсене аса илӗпӗр. Тепӗр тесен – ку çурта вăл пӗччен лартман вӗт. Пултарнă таран эпир те пулăшнă...

Çаплах та-ха, анчах тăвансем те пӗр-пӗрне ырă тунине манаççӗ çав.

«Шăллу çăкан çӗрӗк тункати хăраххи. Пурнăçра шăртне пусараймасть, – терӗ пӗррехинче Ваçука ялти ятлă-сумлă мучи. – Мӗн усси унран, хăйне ырă тăвакансене маннăскертен?» Йăмăкӗн сăмахӗ аса килчӗ çав вăхăтра тата. Çаксем чăна килнине каярахпа хăй те ăнланчӗ арçын.

Çуралнă киле çӳрекелет вăл, анчах хутра-ситре кăна. Хăй сумка тулли кучченеçпе кайсан та шăллӗ çемйинчен пушăллах тухать. Амăшӗ пурăннă чухне сӗтел тулли ӗçме-çиме хатӗрлетчӗ, аш-пăш, çăмарта парса ярaтчӗ. Халӗ вара чăланта çакăнса тăракан сысна тушкисене пиччӗшӗ курасран алăка пысăк çăрапа питӗрсе илеççӗ. Шăллӗпе кинӗн хыт кукарлăхне кура тăванӗн чунӗ юлашки вăхăтра тăван килтен писсе пырать.

Вӗсем икӗ питленни тӗлӗнтерет арçынна. Хăйсене йӗркеллӗ те сăпайлă çын пек тыткалаççӗ, турра ӗненеçни тăваççӗ. Арăмӗн тăванӗсем умӗнче шăллӗ ташласа тăрать, вӗсене çăварӗнчен пăхать, йăпăлтатать.

...Пӗррехинче ывăлӗ ашшӗне ялти тетӗшӗпе инкӗшӗ хăнана чӗннине пӗлтерчӗ. Арçын: «Каймăпăр», – тесен те лешӗ ӳкӗте кӗртрех: пӗр тăвансен килӗштерсе пурăнмаллине аса илтерчӗ, çав вăхăтрах кучченеç туянса тăккаланмалла маррине систерчӗ.

Шупашкарсене ялта хапха умне тухса кӗтсе илчӗç, сӗтел хушшине те лартрӗç, анчах та малтанхи кун пӗçернӗ купăста яшкипе кăна хăналарӗç. Картиш тулли выльăх-чӗрлӗх, хур-кăвакал усракансен аш-пăшӗ те пулмалла пек ӗнтӗ. Кăпăклă сăри те курăнмарӗ. Шеллерӗç-хӗрхенчӗç пулмалла. Хăналас шухăшпа мар, техникумран вӗренсе тухнă кӗçӗн хӗрне сумлăрах ӗçе вырнаçтарас тӗллевле чӗнсе илнӗ иккен вӗсене 150 çухрăмри хуларан кӗсье телефонӗпе шăнкăравласа.

Çакă Ваçука тӗлӗнтерчӗ, ывăлӗ те кăмăлсăрланчӗ. «Атте, сана итлемеллеччӗ. Машинăна усăсăр хăваларăмăр. Тете патне тек килсе çӳремӗпӗр. Асатте-асанне пурăннă чухнехи пек мар кунта халӗ, ним çукран чӗнмеççӗ: хăйсене кирлӗ пулнăран кăна йыхравлаççӗ. Тăванлăх туйăмӗ юлман сан шăллупа кинӳн», – хăй тӗллӗн калаçса пычӗ руль умӗнчи çамрăк çын.

*Патшалăх пулăшăвӗ*

# Тивӗçлисене – хваттер

Ветерансене хваттерпе тивӗçтересси – социаллă политикăн тӗп тӗллевӗсенчен пӗри. Элӗк районӗнче çӗртме уйăхӗн 1-мӗшӗнче Тăван çӗр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă граждансене тата вӗсен çемйисен членӗсене – хваттер условийӗсене лайăхлатма тивӗççисен йышне кӗрекенсене – çурт-йӗр туянма е лартма социаллă тӳлев правин свидетельствине савăнăçлă лару-тăрура панă.

Раççей Федерацийӗн Президенчӗн указӗпе килӗшӳллӗн ăна Тăван çӗр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă салтакăн тăлăха юлнă арăмӗ – Шуркассинчи Ольга Лаврентьевна тивӗçнӗ. Район администрацийӗн пуçлăхӗн пӗрремӗш çумӗ Лидия Никитина свидетельство илнӗ ятпа Ольга Лаврентьевнăна ăшшăн саламласа вăл сертификатпа ăнăçлă усă курасса, çӗнӗ çуртра ветерана ăшă та хăтлă пуласса шаннине пӗлтернӗ.

Асăннă указа пурнăçа кӗртнӗренпе районти 189 ветеран хваттер условийӗсене лайăхлатмалли право пуррине çирӗплетекен сертификатлă пулнă, вӗсенчен 188-шӗ пурăнмалли вырăн туяннă. Çак тӗллевпе пӗр хут паракан тӳлев виçи 1050660 тенкӗпе танлашать.

Хальхи вăхăтра сертификат кӗтекен ветерансен списокӗнче Тăван çӗр-шывăн Аслă вăрçине хутшăннă салтаксен тăлăха юлнă ултă арăмӗ шутланать.

*Кăштах кулăш*

### Сывлăхшăн çыхăнмалла

**Аякри ялта пурăнакан пиллӗкри Çеруш Шупашкарта халӗччен пулман, Атăла та курман. Хальхинче аслашшӗпе иккӗшӗ çула тухрӗç. Автобус хусканас умӗн салона кӗрсе ларнă хӗрӗнкӗ Микуçа водитель хăрушсăрлăх пиçиххийӗпе çыхăнтарчӗ. Аслашшӗ те хăрушсăрлăх хатӗрне майлама пикенчӗ.**

**– Асатте, эпир ӳсӗр мар, апла тăк ларкăч çумне çыхăнмастпăр, юрать-и? Микуç пичче вара йăванса кайма пултарать, ăна çавăнпа вӗренлерӗç, – тет арçын ача.**

**– Мăнукăм, йӗрки çапла: çула тухас умӗн пурин те пиçиххипе çыхăнмалла, – ăнлантарать ватти. – Сыхлăхшăн çапла тумалла.**

**Ревокат МОИСЕЕВ.**

* * *

**Каччă авланнă. Тепӗр виçӗ уйăхран çамрăк арăм упăшкине ача çуратма вăхăт çитнине пӗлтерет.**

**- Виçӗ уйăх кăна пурăнтăмăр вӗт...**

**– Туйччен виçӗ уйăх манпа пултăн, пӗрлешсен – тепӗр виççӗ, 3х3=9!!!**

**Кӗçех вăл ача çуратмалли çуртран шăнкăравлать:**

**– Чунăмçăм, пирӗн хура ӳтлӗ арçын ача çут тӗнчене килчӗ.**

**– Мӗнле майпа?**

**– Эпир ача çуратмалли çурта кайнă чухне çула хура кушак татнине аса ил-ха...**

**Çамрăк упăшка ашшӗ-амăшӗпе канашлама каять:**

**– Атте, ăнлан-ха, 3х3=9 тата хура кушак...**

**– Амăшӗ, эпӗ сана ача çуратмалли çурта леçнӗ чухне çул урлă ашак каçнине ас тумастăн-и?**

# Кăра Тарье

Тарье ял çыннисене самаях тертлентернӗ-тӗлӗнтернӗ. Виçӗ хут качча кайса та тӗпленсе пурăнайманскер юлашки упăшкин амăшӗпе тытăçнă самантра ватă çыннăн хăлхине çыртса чутах татса илмен, лешне вăхăтра сыватмăша леçнипе инкеке сирме пултарнă.

Унашкал кăра çилӗллӗ çын пулнине ялти ватăсем те ас тумаççӗ. Ара, Праскипе иккӗшӗ аншарли ӗçсе ларнă чухне те «Черккӳне туллирех турăн», – тесе çупкă çитернӗ вăл. Мухмăр чӗртмешкӗн эрех тупса паманшăн Варуççан пахчара тин лартнă помидор калчисене çӗрле пырса кăкласа пăрахнă. Тарас пичче ăс пани килӗшмен – чăх чӗпписене наркăмăш ӗçтерсе вӗлернӗ.

Ватлăх çулӗсем çывхарма пуçласан Тарье тăна кӗме тытăннă курăнать. Çак вăхăтра чир-чӗрӗ те çулăхнă, сыватмăшра выртса тухни те пулăшман.

Кӳршӗ ялти Укаç кинемей ăна: «Тарье, ялти çынсене усал туса çылăха кӗтӗн вӗт. Чир-чӗрӳ çавăнпа çыхăннă. Леш тӗнчене кайиччен вӗсенчен пуринчен те каçару ыйтма тивет, унсăрăн тамăк хуранне лекетӗн», – тенӗ иккен. Анчах лешӗ çакна йышăнасшăн пулман, ватăскер пустуй калаçнăн туйăннă ăна. Амак пусарсах çитерсен каллех тухтăрсем патне кайнă, пӗр вӗçӗм эмел çăтнă – усса кайман. Аптранă кăвакал кутăн чăмнă тенӗ евӗр çав кинемей патне тепре çул тытнă. «Сана иртнинчех ял халăхӗнчен каçару ыйтмалла терӗм вӗт. Халӗ те çаплах калатăп», – пӗлтернӗ Укаç чӗнмен хăнана кăларса янă май.

Ватă çын хушнине пурнăçланă хӗрарăм, çăмăл туйăмпа килне таврăннă. Тарье чунӗ тухманнипе чылай вăхăт асапланса выртман, мунча кӗрсе тухнă хыççăн сывăрма выртнă та урăх вăранман.

Çынна усал туни каялла таврăнать тесе несӗлсем ахальтен каламан çав...

■ **Александр ВИШНЕВСКИЙ.**

Шупашкар хули

# Шӳтлеме ăс кирлӗ

Вăхăчӗ самаях иртнине пăхмасăр ака уйăхӗн пӗрремӗш кунӗнчи ăнăçсăр шӳте ку тăрăхри халăх паянччен те манайман-ха.

Чакаç ачисем пирӗн шкула вӗренме çӳретчӗç. Паллах, çав кун вӗсем самаях шӳтленӗ. Çапах картне ларайман курăнать. Пӗрин, айванскерӗн, пуçӗнче çӗнӗ шухăш тӗвӗленнӗ: татах суймалла, çынсене улталамалла. Тăкăрлăкри пӗрремӗш çуртăн чӳречинчен шаккаса: «Пирӗн ялти тăванăр вилнӗ», – теме хăйнă. Чӗререн хурланса ӳкнӗ çынсем халăх йăли-йӗркипе апат-çимӗç илнӗ те кӗреçе йăтса Мăкăртан Чакаçа виле пытарма васканă.

Ак тамаша, сывă та таса çӳрекен тăванӗ вӗсене алăк уçса кӗртнӗ...

Шупашкарта вара ăссăрла çакнашкал шӳт ăсти çу уйăхӗнче тупăннă. Улттăмӗш хутра пурăнакансер, çӳлти кӳршисем пахчана кайнине пӗлсен ывăлӗ патне шăнкăравласа вӗсен хваттерӗнчен шыв пӗрремӗш хута çитиччене юхса анни пирки пӗлтернӗ. Каччă амăшӗ патне шăнкăравланă. Чӗрепе чирлӗ хӗрарăм хыпаланнипе аптраса ӳкнӗ, ăна тăна кӗртмешкӗн васкавлă пулăшу чӗнсе илме тивнӗ. Пурнăçне тухтăрсем çăлса хăварнă.

...Хваттерте вара пурте йӗркеллӗ: крансем хупă, пӗр тумлам та патлатман. Эрех ӗçсе пуçне минретнипе шӳтлес тенӗ хӗрарăма та çакан çӗрӗк тункати теес килет манăн.

Самана улшăнăвӗ, çынсен пурнăçӗнче мул пӗлтерӗшӗ ӳссе пыни тăвансен, пӗлӗшсен, кӳршӗсен ырă хутшăнăвӗсене хавшатрӗ. Пӗр-пӗрин патне çӳреми пултăмăр вӗт.

Çапах та ан манăр: ку тӗнчере эпир хамăр тӗллӗн кăна пулаймăпăр, тăван тăвалла туртни, пӗлӗш канашпа пулăшни, кӳршӗпе килӗштерсе пурăнни ылтăнран та хаклă, хӗвелтен те ăшă.

■ **Егор ВАСИЛЬЕВ-БУРЗУЙ, педагогика ăслăлăхӗн ӗçченӗ**

**Кăларăма Валентина СМИРНОВА хатӗрленӗ.**

# МĚН ÇЫРАÇÇĚ ХАÇАТСЕМ

Çын тăк çын

## Ěçмелле мар, ӳркенмелле мар!

### Вěрентекен фермер пулса тăнă



***Унăн хуçалăхěнче илем тěнчи – чечексем, тěмсем, лăсăллă йывăççем, улма-çырла. Санкт-Петербургри математика учительници пушă вырăнта çěр-шывăн чи ăнăçлă агропитомникне йěркеленě.***

***Татьяна Галактионова хăйěн 17 гектарě çинче – директор та, прораб та, сутуçă та. Вăл плантаци тăрăх кускалать, тавар туянакансемпе хутшăнать, телефонпа калаçать. Çак чечек-çырла çăтмахěнче унăн çурчě çěкленет /çурт тăрринче аист вырăн тупнă/ – кунта Татьяна Валентиновна мăнукěсемпе йăпанě.***

#### «Çěр çинче шухăшламасăр пурăнмалла мар»

**– Татьяна Валентиновна, задача-теорема патěнчен мěнле майпа-ха эсир йăрансем патне çитнě?**

– Çěн йěркелӳ пуçланнă вăхăтра алăра 3 ачаччě – ывăлпа 2 хěрěм. Уйăхне 100 тенкě укçа илеттěм. Мăшăрăм çук, пěччен – вěсене мěнле те пулин ӳстермеллеччě, тăрантармаллаччě. Мěн тăвасси çинчен шухăшлама пуçларăм. Чечек тěнчи ют марччě маншăн: ача чухне Сочире пурăннă, анне унта чечек ӳстерекен пулнă. Чечек лавкки уçма шухăшларăм. Каярах тата кăштах çěр илме, чечек çитěнтермешкěн пуçăнма 2 çул укçа пухрăм. Ěмěтěм тинех пурнăçа кěме пуçларě. Çав лаптăк хут çинче çеç çěрччě, тěрěссипе, пире шурлăх уйăрса пачěç. Анчах çакна çуркунне юр кайсан çеç пěлтěмěр. Сухалама пуçларăмăр – трактор... пуçěпех путлăха лакса ларчě! Шурлăх-и? Типěтěпěр! Пирěн «ылтăн» çěр çинче ăна уйăрса панă хыççăн 15 çултан çеç кăштах тупăш илме пуçларăмăр. Ун умěн хулара мěн ěçлесе илнине пěтěмпех кунта хывнă.

#### Юлхав джинн

**– Хуçалăх тăрăх экскурси ирттернě вăхăтра сирěн сотрудник мана эсир ěçченсене хěллехи вăрăма тăсăлакан отпускшăн та тӳленине пěлтерчě...**

– Çапла, мěншěн тесен лайăх çынсене ěçре тытма тăрăшмалла. Пирěн сезонлăх ěç вěт, çапах та сивě вăхăтра та мěнпе те пулин пурăнмалла-çке. Ěçченсем сахал. Пěррехинче ман пата Америкăран шкул ачисен ушкăнě килчě. Ачасем пирěн шыва, чей те, ěçмеççě. Ыйтса пěлме пуçларăм – мěншěн? Вěсем вăтанкаласа тăчěç, кайран акă мěн пěлтерчěç: пирěн шывра Юлхав джинн пурăнать имěш, ăна ěçсен ху та юлхав пулса тăратăн. Тěнче шухăшланă тăрăх – Раççейре юлхавсем пурăннипе пирěн çěр-шыв çěкленеймен. Ку чăнахах та çапла. Çынна ěçе илнě чухне канмалли кунсенче те, каçхине те ěçлеме сěнетěп – кайран пур пěрех 4 уйăх канмалла-çке. Нумайăшě килěшет тетěр-и?

Юлхавлăха çěнтерме пулать-ха. Ěçкěçе тӳрě çул çине кăларма вара... Ěçкěпе иртěхесси те юлхавлăхранах пуçланать. Ěççěр юлсан вăхăта усăллă ирттерме тăрăшмалла.

**– Кострома облаçěнчи колхоз председателě, 24 çулти хěр, ěçкěпе иртěхнипе кěрешесси ялти чи кăткăс ěç пулнине пěлтернěччě.**

– Сотрудниксене тěрěслеме эпě çулйěр инспекторěсенни пек алкотестер та туяннăччě. Эрех ěçнěшěн айăплаттăмччě. Ěçкěççене тинех çěнтертěмěр. Халě табак туртнипе кěрешетпěр. Туртма пěр пěчěк будка уйăрнă, унта кăнтăрлахи апат вăхăтěнче кăна кайма юрать.

Паллах, «ырă сунакансем» те çителěклех. 2 çул каялла манăн котельнăя çунтарса ячěç... Çапах та йывăрлăхсем пиçěхтереççě кăна.

#### «Пирěн çынна хуçа кирлě»

**– Раççейěн аграри секторне колхозсен шучěпе çеç çěклеме пулать текен шухăш пур.**

– Эпě пачах урăхла шухăшлатăп. Колхоз мěн вăл? Хуçа çук вырăн. Раççей çыннине хуçа кирлě.

Америка та пысăк çěр-шыв – çапах та фермерсем лайăх пурăнаççě. Вěсене патшалăх пулăшать. Хура çырла мěнле туса илмеллине тěпченě чухне АПШна кайнăччě, пěлěшěме фермер хуçалăхěсем тăрăх кăтартса çӳреме ыйтрăм. Вăл нумай шухăшласа тăмарě, министерствăна çырчě. Вара мěн пулчě тетěр-и? Хура çырла лаптăкěсем тăрăх мана АПШ ял хуçалăх министрěн çумě кăтартса çӳрерě! Çакнашкалли пирки пирěн патра шухăшламалли те çук. Вěсен пěр фермерěнчен ыйтатăп: ав çав тěм сирěн мěнпе чирлет-ха? Вăл: «Нимěн те пěлместěп, ыран университетран çынсем килěç, темиçе çулça тěрěслеме илсе кайěç, каярах хăйсемех сиплěç». Мěн чухлě тӳлемелле пулě вара çакăншăн? «Мěншěн тӳлемелле? Пирěнтен налуксем тытса юлаççě-çке!» Налук тӳленěшěн вěсене веçех калаççě – çырла хăçан пуçтармалла, мěнле шăвармалла. Вěсен ыйтăвěсемпе патшалăх ěçлет. Тěрěслевçěсем те унта мěнле те пулин пулăшу кирлě мар-и тесе пыраççě.

Вăрламаççě вěсем. Çырла пахчисене те карта тытса çавăрман.

**– Пирěн хăçан çапла пулě?**

– Çапла пултăр тесен пирěн çěнě ăру пăхса çитěнтермелле. Малтанхи вăхăтра мана рабочисем çапла калатчěç: «Пире 70 çул вăрлама вěрентнě, эсир пěр сезонтах çак йăларан пистересшěн». Ырă улшăнусем пур. Çамрăксем урăхларах халě, тӳрě кăмăлпа пурăнасшăн. Тěп хаклăхсем – ěçле, ан вăрла, эрех ан ěç – генетика шайěнче çирěпленсе çитиччен пěр ăру кăна мар улшăнě-ха. Çавна май ял хуçалăхě те, çěр-шыв та çěкленěç.

Кăçал манăн тухăç чăннипех те пысăк – икě хěрěм икшер мăнук парнелě! 6 мăнук пулě ун чухне. Çапла пурнăç тăршшěпех пăхса ӳстеретěп – вěренекенсене, ачамсене, мăнукăмсене, ӳсентăрана. Вěсене пурне те юрататăп.

■ **Ольга КОРОБИЦЫНА.**

/«Аргументы и факты»/

Истори вăрттăнлăхěсем

***100 çула яхăн каялла Ярославльте Советсене хирěç шуррисен пăлхавě иртнě. Ăна Борис Савинков йěркеленě. Çак восстание тěплěн тишкернě темелле ěнтě. Çапах та ун тавра тěрлě сас-хура çӳрет. Вěсенчен пěри нумаях пулмасть Ярославльти Которосль шывěнче «тухнă». Кăçал юхан шыв çав тери ăшăхланнă, баржа евěрлě пăрахут пайěсем курăнма пуçланă. Пăлхавçăсем 1918 çулта тыткăна илнě большевиксене тытнă «вилěм баржиех»-ши вара ку? Совет тапхăрěнче çак баржа хăйне евěрлě идеологи символě вырăнěнче пулнă.***

## «Вилěм баржи» тухман-ши?



#### Паян кунччěнех хăрушă

Которосль шывěн çак вырăнěнче – путлăх, пăрахут юлашкисем патне 10 метртан çывăхарах пыраймастăн, шыв çавăрттарса илет. Çапах та çакнашкал инçěшěнчен те эпě карап кăшкарě пěр 10 сантиметр шывран тухса тăнине куратăп, пěр вырăнта тата пăтасем кăнтарса тăраççě.

Юнашарах пěчěк кимě ишсе иртрě, унăн хуçине эпě хама çывăхарах илсе пыма ыйтрăм, анчах та вăл кимме сиен кӳресрен хăрарě. Вырăнти экскурсовод Александр Лебедев та хăйěн катерěшěн шикленчě, апла пулин те пăрахут юлашкисен çумěпе ишме килěшрě.

– «Вилěм баржи-и?» Пěлместěп, пирěн вырăнсенче çакăн йышши пăрахут сахал мар çӳренě. Тен, ку баржăна Тăван çěр-шывăн Аслă вăрçи вăхăтěнче бомба лекнě? – хăйěн шухăшне пěлтерчě Александр.

– Манăн пěр тěрлě хурав çук. «Вилěм баржине» шыв юхăмě çак вырăна илсе килме пултарнă-и – тишкерес пулать, – терě Ярославльти П.Г.Демидов ячěллě патшалăх университечěн историкě Андрей Данилов. – Урăх верси те пур-тăр. Пăлхав умěн маларах, 1918 çулхи çуркунне, Петроградран кунта Артиллери истори музейěн экспоначěсемпе темиçе баржа çитнě.

Петрограда ун чухне нимěççем тытса илме пултарнă, унтан хаклă йышши япаласене эвакуацилеме тăрăшнă. Çав вăхăтра пěр баржа /унта хăйне евěрлě тупăсем, йěтресем, мундирсем пулнă/ çак вырăнта тěлли-паллисěр çухалнă.

Эпир Даниловпа пěрле шывран мěнлерех истори «пăхнине» ăнланма хăтланатпăр. Ку вырăн Ярославль варри вěт. Которосль Атăла юхса кěнě çěртен инçе те мар. 100 çула яхăн каялла кунта Ярославльти большевиксене шыв çинчи тěрмене лартнă. Вěсенчен хăшě-пěри çăлăнайман...

#### Атăлта вилěм тупнă

Утă уйăхěнчи пăлхавăн пěрремěш кунěнчех пăлхавçăсем çар комиссарне тата хула ěçтăвкомěн председательне персе вěлернě. Çӳллě шайри ытти парти чиновникне, коммунистсене тата вěсен майлисене арестленě, баржа çине ăсатнă. Баржăна Атăл варрине илсе тухнă, яккăр янă. Миçе çынна арестлени ку таранччен те паллă мар. Сыхланса юлнă списокра 84 хушамат, çапах та веçех хăйсен куçěпе курнисем тыткăна илнисем ытларах пулнă тесе çирěплетеççě.

– Эпě пěлнě тăрăх – арестленисем 100 яхăн пулнă, – тет Андрей Данилов. – Пăлхавăн пирвайхи кунěсенче шуррисем документсене питě тěплě хатěрленě. 6 çын вилнě, историксем урăх цифрăсем те калаççě.

Ку вутă тата пěренесем турттармалли баржа пулнă. Тăршшě – 70, çӳллěшě – 2 метр.

Сывă юлнисем аса илнě тăрăх – тыткăна илнисем çавнашкал пăрахутра хěртсе пăхакан хěвелрен те, çěрлехи сивěрен те, çумăртан та хӳтěленеймен.

Тыткăна илнисем выçлăха, шыв çитменнине, сурансене пула асапланнă. Темиçе çын пуля лекнипе вилнě – пăлхавçăсем те, Хěрлě çар чаçěсем те /вăл хула патнех çитнě/ перкелешсех тăнă. Баржа варринче пулнă.

Тěрěссипе, перкелешнě çеç мар, тупăсенчен пенě, сывлăшран бомбăсем пăрахнă. Пěтěмěшле илсен совет влаçěшěн çак пăлхав хакла ларнă. Авалхи хулан центрти пайне веçех аркатнă /2147 çурт çине бомбăсем пăрахнă, 28 пин çын килсěр-çуртсăр юлнă, 20 фабрика-завод çунса кайнă/, ытти енěпе те çухатусем пулнă.

16 кун /утă уйăхěн 21-мěшěччен/ хаяр çапăçусем пынă. «Вилěм баржине» ăсатнисем 12 кунран ирěке тухма пултарнă. Шыв çинчи тěрмене лекнисем хăйсем çинчен манса кайнине ăнлансан Ярославльпе юнашар Атăлăн тепěр çыранне тарма хăтланнă. Вăйсăрлансах çитмен 3 арçынна çула кăларса янă. Вěсен çырана ишсе çитсе пулăшупа килмелле пулнă.

Иккěшне кăштах кайсанах вěлернě, виççěмěшěн баржа çине таврăнма тивнě. Юлашки кунсенче баржа çинче çынсем выçăхсах çитнě: йывăç хуппи, пиçиххи çинě...

Баржа мěнле майпа яккăртан хăпни ку таранччен те паллă мар: тěрлě верси пур. Пěрремěшěнчен, тыткăна лекнисем яккăр сăнчăрне хăйсем касма хăтланнă. Иккěмěшěнчен, ăна снаряд лекнě. Ку çапла-и е çук-и – баржа ирěке тухнă, шыв юхăмěпе ишсе кайнă. Темиçе çěр метртан çырана пырса тăрăннă. Шăпах Которосль Атăла юхса кěнě çěрте.

Телее, баржа «большевиксен» çыранне пырса тухнă. Асапланса çитнě çынсене шыври тěрме палуби çинчен антарнă.

Баржа шăпи унтанпа паллă мар. Кăçал çуркунне Которосль çак ыйту хуравне тупма шанăç панă. Анчах унпа усă курман. Халě шыв каллех çěкленнě, пăрахут юлашкине хупланă. Ăна шыв айěнчен кăларма никам та васкамасть.

■ **Виктория САВИЦКАЯ.**

/«Собеседник»/

Ветслужба

# Йĕркене кĕртме пулăшĕ



***Усал йытăсем ял-хулан общество вырăнĕнче ирĕккĕн çÿресе çынсене хăрушлăха кĕртеççĕ, хăш-пĕрне çыртса суранлатаççĕ. «Хыпарăн» утă уйăхĕн 2-мĕшĕнчи номерĕнче Элĕк районĕнчи Мартынкасси ялĕнчи Вениамин Архипов ветеранăн йыт качка килти хуçалăхсене сăтăр кÿни çинчен çырнă статйи пичетленчĕ. Вăл республикăн ĕç тăвакан тивĕçлĕ органне килте йытă тытмалли, ăна общество вырăнĕнче уçăлтарса çÿретмелли, тĕрлĕ сăлтава пула хуçасăр юлнă йытăсене тытса хупмалли йĕрке çирĕплетме сĕнет. Ыйтăва республикăн ветеринарин патшалăх службин ертÿçи Сергей Скворцов хуравлать.***

– Ун пек çырусем службăна та килеççĕ. Сăнчăр-кантраран вĕçертнĕ хаяр йытăсем этем йышлă пурăнакан вырăнта пуçтарăннине, ял-хула çыннисене, вĕсен пурнăçне хăрушлăха кĕртсе ÿкерме пултарнине, сĕтĕрĕнчĕксем урамра пуханнăран ачасене уçă сывлăшра вылятайманнине, ветерансем лавккана кайма хăранине хыпарлаççĕ, – терĕ Сергей Иванович. – Ку ыйтăва республикăра кăна мар, федерацире те темиçе çул çивĕч лартаççĕ. Раççейре çак чăрмава пĕтермелли хатĕр йĕрке çукран регионсенче йывăрлăхран тĕрлĕрен тухаççĕ. Пĕрремĕшĕн ĕç меслечĕ иккĕмĕш е виççĕмĕш ĕç меслетĕнчен уйрăлса тăрать.

**– Совет саманинче йĕрке пулман-и? Ĕçе ăна пăхăнтарма тăрăшман-и?**

– Пулнă. РСФСР Министрсен Канашĕн 1980 çулхи авăн уйăхĕн 23-мĕшĕнчи «РСФСР хулисенче тата çын пурăнакан ытти вырăнĕнче йытăпа кушака тытса хупас ĕçе йĕркене кĕртесси çинчен» 449-мĕш йышăну тата РСФСР хулисенче, çын пурăнакан ытти вырăнĕнче этем хÿттисĕр юлнă йытăпа кушака тытса хупмалли, вăхăтлăха тăрантса усрамалли тата вĕсемпе усă курмалли инструкци паян та вăйра тăрать. Ăна РСФСР Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх, Сывлăха сыхлас ĕç, Юстици, Ял хуçалăх министерствисем 1981 çулта çирĕплетнĕ. Анчах çак актсенчи чылай йĕрке тахçанах кивве тухнă, паянхи пурнăçпа килĕшсе тăмасть тата Раççей саккунĕсене хирĕçлет.

**– Çапах та çынсем Шупашкар картишĕсенче е ялта йыт качкана хăвалакансене сахал мар курнă. Вырăнти влаç вĕсене миххе чăмтарма шанман-и?**

– Çын хÿттисĕр юлнă чĕрĕлĕхе тытса пĕр çĕре пуçтарассине юлашки çулсенче вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем йĕркелерĕç. Ĕçе тума сунарçăсенчен, пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăх ĕçченĕсенчен ушкăнсем туса хучĕç. Шупашкар муниципалитечĕн «Спецавтохозяйство» предприятийĕ те пурнăçларĕ. Килсĕр йытăсемпе кушаксен ытларахăшне наркăмăш хушса панă апат çитерсе пĕтернĕ. Вĕсен виллине пуçтарса Çĕрпÿ районĕнчи ветсанутиль заводне леçнĕ. Прокуратура çак йĕрке вăйра тăракан саккунпа килĕшсе тăманнине палăртрĕ. Çавăнпа муниципалитетсем мĕн тумаллине пĕлмесĕр пĕр хушă аптраса тăчĕç.

Республикăн Министрсен Кабинечĕ кăçалхи çĕртме уйăхĕн 11-мĕшĕнче «Чăваш Республикин территорийĕнче çын пăхман чĕр чунсен хисепне йĕркелесе тăрас тĕлĕшпе пурнăçламалли ĕçсем çинчен» йышăну кăларчĕ. Проектне служба хатĕрлерĕ.

**– Унпа паллаштарсамăр?**

– Çапкаланчăк чĕр чунсене /йытăпа кушака çеç мар, ытти чĕрĕлĕхе те/ тытас, пухас, пĕр çĕре илсе пырса хупас ĕçе ятарлă организацисем /юридици сăпачĕсем, уйрăм предпринимательсем/ вырăнти хăй тытăмлăх органĕсемпе çирĕплетнĕ килĕшĕве пурнăçласа тăваççĕ. Çынсен сĕтĕрĕнчĕке район ветстанцине леçес ыйтăва муниципалитет йĕркеленĕвĕсен умне лартмалла. Ял-хулара ку енĕпе йĕрке тăвасси – вĕсен тивĕçĕ. Çавăнпа администраци пуçлăхĕпе, вырăнти депутатсемпе çирĕплетсе калаçмалла. Пуçлăх ячĕпе заявлени çырмалла. Служба ветстанцийĕсем утилизацилеме илсе килнĕ чĕр чунсене тĕрĕслесе, акт çырса йышăнаççĕ.

**– Калăпăр, йытă е кушак хуçисем ветстанцие пырсан хăйсенне палласа илеççĕ, тавăрма ыйтаççĕ. Ун пек чух мĕн тăватăр?**

– Пĕр сăмахсăрах парса яратпăр. Хуçи ветстанцие вăхăтра килеймесен темиçе кун хупса усратпăр, тăрантаратпăр. Чĕр чун пирĕн патра пулнине хуçине ял тăрăхĕн администрацийĕ е полици урлă пĕлтеретпĕр. Харпăрлăхçăсем ветстанцие пырса тусĕсене илсе кайсан тата ыттине çынсем усрама илмесен учреждение юлнине пурнăçран уйăратпăр.

Министрсен Кабинечĕн йышăнăвĕпе килĕшÿллĕн вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем çĕнĕ йĕркене пăхăнасса, ял-хулана çапкаланчăк чĕр чунсенчен тасатасса çирĕп шанатăп.

**■ Юрий МИХАЙЛОВ калаçнă**

# Сиплевшĕн тÿлесшĕн пулман

***Страхланă тăк – инкек сиксе тухсан пĕр чăрмавсăр тÿлемелле пек ĕнтĕ. Анчах страхлакан компанисем тăкакланасшăн мар çав. Ирĕксĕрех прокуратурăн хушша кĕме, суд урлă тĕрĕслĕх шырама тивет.***

Çĕнĕ Шупашкар хулин сучĕн йышăнăвĕпе хĕрĕн Руфинăн интересĕсене хÿтĕлекен Людмила Соломонова валли çул çинчи инкекшĕн айăплинчен кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен кÿнĕ сиене саплаштарма 500 пин тенкĕ шыраса илнĕ, анчах сиплев валли кайнă тăкаксене «МСК страхлакан компани» АУОран шыраса илессине хирĕçленĕ.

Инкекĕ çулталăк каялла, çĕрте уйăхĕн 13-мĕшĕнче, пулнă. Автомашина водителĕ Дмитрий Федоров хăвăртлăха юраниччен ÿстернĕ май çул çитмен Руфинăна таптанă, унăн сывлăхне йывăр сиен кÿнĕ. Хĕр ача инвалид пулса юлнă, ăна пăхакан кирлĕ. Медицина карттинчен çакă паллă: реабилитаци вертикализаторĕпе сипленмелле, выртса тăма ятарлă матрац пулмалла. Врач çак реабилитаци хатĕрĕсем кирлине çирĕплетнĕ, сывăх çыннисем вĕсене туяма 81,7 пин тенкĕ тăкакланă пулин те хула сучĕ çак укçана страхлакан организацирен шыраса илес темен.

Çĕнĕ Шупашкар прокурорĕ судăн çак йышăнăвĕпе килĕшмен, ЧР Аслă сучĕн гражданла ĕçсене тишкерекен коллегине апелляци тăратнă. Тинех ыйту татăлнă: суд коллегийĕ прокурор майлă пулса çĕнĕ йышăну тунă, унпа килĕшÿллĕн Людмила Соломонова валли 81,7 пин тенкĕ шыраса илнĕ.

**■ К.НИКОЛАЕВ**

РЕКЛАМА ПĔЛТЕРÿ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пÿлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет:
- с кадастровым номером 21:08:340308:446 площадью 2276 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос.;
- с кадастровым номером 21:08:340308:447 площадью 2285 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос.;
- с кадастровым номером 21:08:340308:448 площадью 2141 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Шыгырданское с/пос.
Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел. (83532)6-14-26.

Администрация Аксаринского сельского поселения Мариинско-Посадского района Чувашской Республики информирует сельскохозяйственные организации и крестьянские фермерские хозяйства, обрабатывающие эти участки, о возможности приобретения этих земельных участков, выделенных в счет невостребованных земельных долей с кадастровыми номерами:
21:16:000000:121 площадью 658 600 кв.м.,
21:16:000000:114 площадью 516 200кв.м.,
расположенные по адресу: Чувашская Республика Мариинско-Посадский район, Аксаринское сельское поселение в собственность при выкупной цене такого участка не выше 15% от кадастровой стоимости или в аренду при арендной плате, не превышающей 0,3% от ее кадастровой стоимости.
Заявки и предложения принимаются по адресу: 429567, Чувашская Республика, Мариинско-Посадский район, д. Аксарино, улица Центральная усадьба, д. 11, тел. (83542) 30-3-10.

Разное
Утерянный диплом № 112105 0001696, рег. № 6211, выданный БОУ СПО «Чувашское республиканское училище культуры /техникум/» в 2014 г., на имя А.А.Павлова, считать недействительным.

# Трактор – йĕп мар!

***Çапла, йĕп мар, анчах ăна вăрлама та мехел çитереççĕ. 22-30 çулсенчи Игорь Никитин, Игорь Якимов, Алексей Кузовенков, Андрей Степанов, Александр Воронков тата Алексей Синеев шăпах çакăншăн суд умне тăнă.***

Шупашкарти Калинин районĕн сучĕ вĕсен приговорне палăртнă ĕнтĕ. Тăваттăшне 2 çул çурăлăха ирĕклĕхсĕр хăварнă, пĕтĕмĕшле режимлă колоние ăсатма йышăннă. Теприн – 2 çуллăх приговор, Синеев вара çирĕп режимлă колонире 3 çул та тăватă уйăх ирттерĕ.

Пурлăх вăрлама малтанах каварлашнă, «сунара» пĕлтĕрхи нарăсăн 27-мĕшĕнче çĕрле тухнă. Тулли мар яваплă пĕр обществăн тĕп хулари база территорийĕнчи «Беларус 82.1» никĕсĕ çинчи ПУМ-4853 погрузчикне тата асăннă маркăллă тракторне вăрласа кайнă – пĕтĕмпе 1 млн ытла тенкĕлĕх. Техникăна çав кунах Вăрмар районне ăсатнă, сутса янă, укçине пайланă.

Судра вĕсем пĕтĕмпех туннă пулин те патшалăх айăплавçи ушкăн айăпне ĕнентерсе пама пултарнă.

**■ К.НИКОДИМОВ**

# Сăмах каçмăш

**Николай КРАСНОВ /Йĕпреç районĕ/ хатĕрленĕ**



**СЫЛТĂМАЛЛА:** 7. Килти кайăк. 8. Ут хатĕрĕ. 9. Утă купи. 10. Литература жанрĕ. 11. Вăл тухман çын тухсан тухать. 14. Пысăк мулкач. 15. Чăваш юрăçи. 16. Унта каяшсене яраççĕ. 18. Сутусăн япали. 23. Кун. 25. Пушар хатĕрĕ. 26. «Хĕрлĕ автан». 27. Вĕçен кайăк. 28. Ĕлĕкхи налук.

**АЯЛАЛЛА:** 1. Çĕнĕ çĕлĕкĕн çĕвви çук /туп. юм./. 2. Усланкăри ... /юрăран/. 3. Республикăри хула. 4. Ăна урана тăхăнаççĕ. 5. Вăл икĕ вĕçлĕ пулать. 6. Атăçăн япали. 12. Пĕчĕк кĕреçе. 13. Ун тăрăх шыв юхать. 17. Чăваш композиторĕ. 19. Кĕске пушă. 20. Ÿсен-тăран. 21. Пÿрт пайĕ. 22. Пахча çимĕç. 24. Тепĕр чух унпа кăнтăрла шырасан та тупаймастăн.

## Сăмах каçмăш хуравĕсем

**СЫЛТĂМАЛЛА:** 7. Кăвакал. 8. Урхалăх. 9. Капан. 10. Халап. 11. Тăман. 14. Карсак. 15. Самана. 16. Лаххан. 18. Тараса. 23. Талăк. 25. Пакур. 26. Пушар. 27. Шаланкă. 28. Куланай.

**АЯЛАЛЛА:** 1. Çăмарта. 2. Палан. 3. Улатăр. 4. Пушмак. 5. Патак. 6. Пăштан. 12. Калак. 13. Валак. 17. Асламас. 19. Саламат. 20. Кантăр. 21. Кăмака. 22. Сухан. 24. Хунар.

www.profilch.ru
ПРОФНАСТИЛ
СОБСТВЕННОЕ ПРОИЗВОДСТВО
ангары,
КОМПЛЕКТУЮЩИЕ ДЛЯ КРОВЛИ, ВОДОСТОКИ, ДЫМНИКИ
МОНТАЖ ЗАБОРОВ
тел. (8352) 22-95-45, 63-82-85







## СУТАТĂП

**168.**Лайăх кĕрекен **таптарнă çăм.** Тел. 8-917-066-41-46.

**481.Сăвакан качака** – 3000 тенкĕ, **путексем** – 1000-шер тенкĕ. Т. 8-987-123-77-97.

**483.Купăс** «Беларусь», **пианино** «Октава». Т. 8-960-311-53-58.

## УСЛУГИ

**51.Бурение** колодцев, скважин; **кольца колодезные** высококачественные. Доставка. Т.: 89278477143, 89373790080.

**152.Бурение скважин на воду.** Т. 89603021293.

**160.Бурение колодцев,** углубление; **продажа и д-ка** ж/б колец. bur21.ru Т. 8-905-343-42-07.

**229.Кровля, обшивка домов.** Гарантия. **Скидки.** Т. 8-927-668-75-74.

**250.Кровельные, фасадные работы**. Монтаж водостоков. Гарантия. Качество. Т. 89033220479.

**273.Бурение скважин** на воду до 50 м. Т. 8-906-381-60-37.

**346.Бурение скважин** на воду. Гарантия. Т. 364060.

**359.Бурение колодцев. Продажа** колодезных колец. Доставка и установка. Т. 89033790901.

**416.Экстрасенс.** Т. 8-987-660-39-29.

**419.Доставка керамблоков, песка, ОПГС** – от 10 до 20 тн. Т. 8-987-673-47-54.

**420.Доставка щебня,** песка, **гравмассы,** керамзита, чернозёма. **Услуги** самосвала. Т. 89876692941.

**449.ОКНА, МЕБЕЛЬ** – по оптовым ценам. Т. 8-987-576-92-32.

**456.Услуги КаМАЗа**-55102, **ф/погрузчика. Доставка** песка, щебня, кирпича, гравмассы. Сертифицированы. Т. 89033893039.

**459.Установка** заборов, ворот, винтовых свай. Т. 8-917-650-06-40.

**460.Обшивка** домов сайдингом, **утепление.** Т. 8-902-287-27-77.

**462.Бурение скважин** на воду. Гарантия. Т. 8-906-387-13-63.




БЕТОН всех марок
(М-200 - 2900 руб./куб.)
РАСТВОР
ОПГС
КЕРАМБЛОКИ
(КБ-20 - 33 руб./шт)
доставка
тел.: 29-25-34, 29-24-88

## ПРОДАЮ

**1.Качественную** фабричную **МЕБЕЛЬ** по доступным ценам: стенки от 7900 р., прихожие от 3600 р., шкафы от 3300 р., комоды от 2300 р., столы от 1000 р., кровати от 4000 р. **Доставка,** сборка. Скидки, рассрочка. Салоны «Express Комфорт»: м-н «Экспресс»; вещ. рынок «Ярмарка»; МТВ-Центр – 4-й эт.; «Северная» ярмарка. **Сайт:** www.ex-comfort.ru. Т.: 46-55-44, 8-953-899-82-24.

**4.ПЛАСТИКОВЫЕ ОКНА.** Низкие цены. Рассрочка. Замер. Доставка – бесплатно. **Т. 89875766562.**

**5.Блоки керамзитобетонные** 20х20х40, 12х20х40, 9х-20х40 пропаренные, гидровибропрессованные заводские от производителя – недорого; цемент, **песок.** Доставка. Разгрузка. Без выходных. Кассовый чек, документы. Т. 8-960-301-63-74.

**6.Песок,** гравмассу, чернозём, **торф,** щебень, **бой кирпича** с доставкой. Т. 8-903-346-07-13.

**8.Гравмассу, песок,** щебень, **торф,** кирп. бой, **керамблок,** керамзит. Пенсионерам, уч. ВОВ скидки. Т. 8-905-199-01-22.

**9.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **навоз, чернозём.** Дёшево. Д-ка. Т. 89033583021, 443021.

**10.Сетку-рабицу** от производителя – более 80 видов, сетку сварную – более 30 видов, **профнастил, гвозди,** столбы, проволоку. **Изготовление** ворот, калиток. Доставка. Выездная сварка /генератор/. Грузоперевозки. Т.: 68-05-67, 34-70-70.

**11.Гравмассу, песок,** щебень, керамзит, **чернозём.** Дёшево. Доставка. Т.: 89276689713, 38-97-13.

**12.Профнастил,** металлочерепицу, **оцинковку** рул., листовую, **трубы** профильные, водостоки, металлосайдинг. Т. 44-44-33.

**15.Кирпич** – любой, брусчатку, **кольца,** ОПГС, КБ. **Т. 8-961-339-33-63.**

**16.СЕТКУ-РАБИЦУ** от производителя – чёрную, зелёную, оцинкованную – около 100 видов, **сетку сварную,** столбы, скобы, проволоку, калитки. Доставка. Без выходных. Т.: 683045, 8-937-952-22-11.

**19.Гравмассу, песок, керамзит, щебень.** Д-ка. Т. 8-903-322-57-66.

**20.Сетку-рабицу,** ворота, калитки, заборы; **кровля,** обшивка домов, навесы. Д-ка. Установка. Пенсионерам **скидки.** Т.: 89022881447, 38-75-74, metalservis21.ru

**21.Керамблоки, гравмассу, песок.** Т.: 8-903-345-63-07, 8-917-675-75-28.

**22.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА.** Замер, доставка – бесплатно. Без выходных. Т.: **89176529694, 8-927-667-95-88.**

**23.Гравмассу, песок, бой кирпича,** щебень. Д-ка. Т. 89061355241.

**24.ГРАБЛИ,** косилки, **сажалки,** копалки, окучники, **опрыскиватели.** Доставка. Т. 8-927-853-35-96.

**26.Керамблоки** 20х20х40, 12х20х40, 10х20х40, **керамзит** в мешках, **цемент,** кирпич, к/блоки. Доставка. Т. 89033468556.

**28.**ПЛАСТИКОВЫЕ **ОКНА – немецкое качество.** Замер. Доставка – бесплатно. Скидки. Без выходных. **Т. 8-937-010-10-54.**

**33.Гравмассу, песок,** щебень, **керамзит.** Д-ка. Т. 89053465671.

**35.Блоки керамзитобетонные** от производителя. Высокое качество. Низкие цены. Доставка. Документы. **Т. 89373866629.**

**38.Брусчатку, плиты тротуарные.** Огромный ассортимент. Укладка. Т. 8-967-470-27-36.

**42.Керамблоки 12х20х40, 20х20х40, кольца** колодезные – диам. 1,5м; 1м; 0,8м; 0,7м; 0,45м. Доставка. **Бурение.** Т.: 89876664140, 89370100141.

**46.БРУСЧАТКУ, тротуарные плиты** – дёшево. Т. 8-903-358-77-72.

**47.Керамблоки** 12х20х40, 20х20х40 от производителя, **цемент М-500.** Т.: 48-92-77, 8-903-389-90-38.

**48.Керамблоки,** кольца колодезные; всё для **фундамента** – ФБС, бой кирп., бетона, свая, ОПГС, песок. Д-ка. Т. 89063814420.

**49.Керамблоки, цемент, керамзит** в мешках. Цены от производителя. Т. 89053447932.

**53.Отруби, зерно, к/корм,** сахар, муку. Доставка. Т. 89373916016.

**58.Гравмассу,** щебень, песок, **керамзит,** бетон, **чернозём, навоз.** Д-ка. Недорого. Т. 89276687015.

**61.БЛОКИ керамзитобетонные** от производителя. Гарантируем высокое **качество.** Низкие цены. Доставка. Т. 89876734754.

**66.Заборы** кованые. Т. 89276689587.

**71.ПИЛОМАТЕРИАЛ** /хвоя, берёза, дуб, липа, осина/, **срубы, дрова,** горбыль. Т. 89033891400.

**73.ПРОФНАСТИЛ, металлочерепицу, сайдинг,** водостоки. Скидки. Замер. Доставка. Монтаж. Т. 8-903-322-04-79.

РЕКЛАМА ПĔЛТЕРӲ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пӳлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

## ПРОДАЮ

**75.Дымоходные трубы** из нерж. стали. **Аргонная сварка:** медь, нержавейка. Т. 44-44-33.

**76.СРУБЫ** с комплектацией. **Липовые срубы** – на заказ. Доставка. Т. 8-937-952-84-67, Владимир.

**79. Прицеп мотоблока, мини-трактора.** Т. 8-905-344-47-35.

**117.ОКНА ЧУВАШИИ.** Пластиковые **окна,** железные **двери.** Замер. Монтаж. Скидки. Т. 89050281182.

**124.Песок,** щебень, **гравмассу,** керамзит, **торф,** кирп. бой, **цемент.** Т. 89033220479, 48-04-79.

**128. Пластиковые ОКНА,** деревянные. Бесплатно: замер, доставка, демонтаж. **Гарантия** 5 лет. **Скидки.** Т. 8-937-391-39-91.

**157.**Пластиковые **ОКНА,** стальные **ДВЕРИ.** Дёшево. Т. 89276689303.

**158.ОКНА, ДВЕРИ "БАРС".** Заводское производство. Бесплатный замер. Рассрочка. Гарантия 10 лет. Скидки. Т. 8-927-668-93-03.

**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.

**221.Профнастил, металлочерепицу, водостоки,** металлосайдинг. Доставка. Замер. Строительство. Т. 89196534368.

**230.Бетон, раствор,** фундаментные **блоки.** Доставка по Чувашии. Т.: 8-937-391-86-48, 8-927-853-57-32.

**249.БРУСЧАТКУ, плитку** тротуарную, **керамзит,** песок в мешках. Замер. Доставка. Укладка. Т.: 8-903-322-04-79, 8-903-358-06-79.

**294.Песок, гравмассу,** щебень, бой кирпича. **Услуги КамАЗа.** Тел. 8-905-341-91-46.

**308.Гравмассу, щебень, к/б блоки.** Доставка. Т. 89278462410.

**316.Гравмассу,** песок, **керамзит,** щебень, бой кирпича, **к/б блоки.** Доставка. Т. 8-905-197-40-19.

**323. Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, **бетон,** раствор всех марок. Недорого. Т. 89613409305.

**355.Песок, гравмассу, щебень.** Доставка. Т. 89053479783.

**376.**Дизельное **топливо** по 25,50 руб. Доставка договорная. Т.: 89196529616, 38-80-12.

**390.Блоки, кирпич** красный, силикатный; **гравмассу,** песок, **керамзит, кольца.** Т. 89278629166.

**406.Керамблок** 20х20х40, 12х20х40; **гравмассу,** песок, **керамзит.** Доставка. Т. 89871297072.

**408.Керамблоки** 20х20х40 от производителя, **цемент** М-500. Т.: 36-26-23, 8-903-379-77-68.

**415.Кольца колодезные** от производителя. Д-ка. Т. 89278416247.

**450.КЕРАМБЛОКИ** пропаренные, вибропрессованные – **недорого.** Доставка. Т. 8-917-677-68-46.

**464.Косилки, грабли, окучники,** пресс-подборщики. Доставка. Т. 8-937-956-00-54.

**472.Гравий, щебень, песок, гравмассу, торф,** перегной, чернозем, асфальтную крошку, опилки. Т.: 8-906-132-63-78, 484161, 8-919-652-69-02.

**476.**Новые **дизельные мини-тракторы.** Тел. 8-927-667-97-98.

**478.Дойных КОЗ** Зааненской породы. Т. 89176546297.

**479.ПЧЕЛОСЕМЬИ в новых ульях** – 5 тыс руб. Т. 8-961-342-90-59.

## КУПЛЮ

**18.Бычков, тёлок, коров,** лошадей. Т. 89625994706.

**141.Коров, бычков и лошадей.** Т.8-903-065-99-09.

**433.КОРОВ.** Т. 8-927-850-85-64.

**452.ДОМ с участком** в любом состоянии. Тел. 89603008787.

**468.Овощи.** Т. 8-906-387-86-46.

**474.Дом или участок.** Т. 41-38-16.

**475.Спецтехнику.** Т. 41-38-16.

## РАБОТА

**110.Монолитчики,** плотники, **монтажники,** шлифовщики, **каменщики,** сварщики. Питание, спецодежда. Вахта. Т. 8-925-002-22-38.

**385.Требуются плотники.** Т. 483900.

**484.Предприятию в МО требуются:** швеи-мотористки, ткачи, фасовщицы, грузчики – граждане РФ, без в/п. Предоставляется общежитие, оформление по ТК. Тел.: 89654451147, 8-965-445-11-48.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:000000:3795 площадью 669290 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Тойсинское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел. (83532)6-14-26.

Администрация Батыревского района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельного участка из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровым номером 21:08:000000:3797 площадью 11364 кв.м., местоположение: Чувашская Республика, Батыревский район, Тойсинское с/пос.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429350, Чувашская Республика, Батыревский район, с. Батырево, пр. Ленина, д. 5. Справки по тел. (83532)6-14-26.

Администрация Козловского сельского поселения Порецкого района Чувашской Республики информирует заинтересованных лиц о приеме заявок от граждан и юридических лиц на предоставление земельных участков из земель сельскохозяйственного назначения для сельскохозяйственного производства в долгосрочную аренду сроком на 49 лет с кадастровыми номерами 21:18:180 101:285, площадью1351158 кв.м., 21:18:180 101:287, площадью 369958 кв.м., адрес (местонахождение): Чувашская Республика, Порецкий район, с/ пос. Козловское, с. Ряпино.

Заявки принимаются в течение месяца со дня опубликования в газете по адресу: 429028, Чувашская Республика, Порецкий район, село Козловка, улица Школьная, дом 190. Справки по тел.: 8(835)4343-216.

# Алексей Германов – тĕнче чемпионĕ

***Мексикăри Канкун хулинче спорт аэробики енĕпе иртнĕ тĕнче чемпионатĕнчен пирĕн ентеш ылтăн медальпе таврăннă.***




Чăваш Енри чи пултарулă аэробист, спортăн тĕнче класлă мастерĕ Алексей Германов çĕр-шыв чемпионатĕнче çĕнтерсе тĕнче ăмăртăвне хутшăнма тивĕç пулнă. Шупашкарти политехника институтĕнче вĕренекенскер командăри юлташĕсемпе пĕрле «Гимнастика ташши» номинацире пухмача «ылтăнпа» пуянлатнă. Шупашкар каччин пĕрремĕш çитĕнĕвĕ мар ку: 2012 çулта та вăл тĕнче чемпионатĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă. Палăртмалла: спортра пысăк çитĕнӳсем тунăшăн республикăри спорт аэробикин федерацийĕн ертӳçин Оксана Дьячкăн воспитанникĕ кăçал Чăваш Республикин çамрăксен патшалăх премине тивĕçнĕ.

**А.МИХАЙЛОВ**

# Телекуравра çĕнтернĕ

***Инновацие информаци технологийĕсен наци ассоциацийĕ тата Раççейри «СТС» телекуравăн «Галилео» программи кăçал «Кулибин стартапĕ» конкурс ирттернĕ.***

«Стартап» çăмах пысăк пĕлтерĕшлĕ конвейера хута янине е машинăна ĕçе кĕртнине пĕлтерет. Унта Шупашкарти 62-мĕш шкул вĕренекенĕ, «Чăваш Республикин чи çамрăк ăслайçи» ята çĕнсе илнĕ, пĕтĕм тĕнчери маçтăрсен ăмăртăвĕнче хайĕн ăсталăхĕпе тĕлĕнтернĕ Максим Смирнов та хутшăннă, «Инвалидсем валли – транспорт хатĕрĕсем» тата «Транспортăн хăрушлăхран хӳтĕленмелли хатĕрĕсем» проектсем тăратнă. Пĕрремĕшĕ пĕтĕм тĕнчери «Архимед» салонра /вăл Мускавра иртнĕ/ Китай ăстаçисен пĕрлĕхĕн наградине тивĕçнĕ.

«Кулибин стартапĕ» программăна республикăран Сергей Никитин инженер та проект ярса панă. Вăл шывра япалана вĕçĕмсĕр тасатакан «Флотатор-У» хутăш тăратнă.

Комисси пурĕ 47 проект йышăннă. Чи лайăххисен йышне 12-шне, вăл шутра Чăваш Ен ăслайçисен 3 проектне кĕртнĕ. 2-шĕ – М.Смирновăн çӳлте асăннă икĕ проекчĕ. Пĕри – С.Никитинăн «Флотатор-У» сĕлти. Çывăх вăхăтра пурнăçра кирлĕ япаласем шухăшласа кăларакан ентешсене «Галилео» программăра кăтартĕç.

**М.СЕРГЕЕВ**

## *Мĕншĕн çапла калатпăр*

# «Шан сире...»

Пĕр çамрăк, пăхса ытармалла мар хĕрарăм упăшки, хăйне çеç юратса пурăнать-и, "сулахаялла" чупмасть-и тесе пĕлессишĕн пуçне ватать. Анчах çакна мĕнле тĕпчесе, тĕрĕслесе ĕненмелле? Упăшки ăна ялан: "Сана çеç, пĕр сана çеç юрататăп, кăмăлатăп. Илтнĕ-и эсĕ, сиснĕ-и эпĕ санран мĕн те пулин пытарнине?" – тесе йăпатать.

Çаксем шухăшласан-шухăшласан /хĕрарăм темерĕн вĕт/ майне тупать. Чи шанчăклă юлташне вăртăнлăха уçса парать: "Эсĕ мана хăвăн сирень тĕслĕ кофтуна, кăвак тутăрна пар-ха, атту упăшка мана хам тумпа çавăнтах палласа илĕ те тарĕ".

Кĕвĕçекенскер юлташне ятарласа каласа тăрса çыру çыртарать: "Эх, Гена, ан çунтар-ха манăн чунăма. Пĕр заводра ĕçлетпĕр, кашни ир проходнойра сана курсан ухмаха тухатăп пулĕ тетĕп, анчах цехсем уйрăм-çке. Манăн сана ялан куç умĕнче пултарас килет. Кăмăлу пулсан – эпĕ санăн ирĕкӳнте, ытамунта".

Акă хайхи кĕтнĕ вăхăт тĕлне палăртнă вырăна – К.Иванов палăкĕ патĕнчи сак çине – арăмĕ пырса ларать, упăшки килессе кĕтет. Мĕн тетĕр, "сансăр пуçне мана никам та кирлĕ мар" текенскер чечек çыххипе палăк патне çывхарса тăрать. Арăмĕ, чеескер, питнекуçне аяккарах, курăнмалла мар пăрса лартнă иккен /тумĕ-юмĕ вара тантăшĕн/. Упăшки хайхи ăш çунтармăш хĕр вырăнне арăмне курах каять. Хăть çĕр тĕпне анса кай.

Ахальтен каламаççĕ çав упăшки арăмне, арăмĕ упăшкине: "Шан сире", – тесе. Тăрсан-тăрсан чее май тупса пĕр-пĕрне тĕрĕслесе илни те кирлĕ пулĕ.

**Роман ЧЕПУНОВ**

## *Тĕпелте чухне*

# Хăяр турăхпа

500 грамм турăх, 2-3 хăяр, çур стакан аçтăрхан мăйăрĕ /тасатни/, 3-4 шăл ыхра, 3 апат кашăкĕ ӳсен-тăран çăвĕ, тăвар, ешĕл çимĕç кирлĕ.

Хăяра шултра теркăпа хырмалла. Аçтăрхан мăйăрĕпе ыхрана вĕтетмелле, хутăштармалла. Турăха кăпăшлантармалла, хăяр, мăйăрпа ыхра хутăшĕ, ӳсен-тăран çăвĕ ямалла, тăвар сапмалла, лайăх пăтратмалла, ешĕл çимĕç сапмалла.

# Гороскоп

*Утă, 6-13*

**Сурăх.** Ывăнма пĕлместĕр, анчах çав тери пăлханатăр! Зодиакăн çак паллин тапхăрĕнче çуралнисем кама-тăр кӳренеççĕ /тунти кун/, ĕçтешĕпе пурин умĕнче те харкашаççĕ /юн кун/, тĕрĕслĕхшĕн тăрăшакана сăлтавсăрах ятлаççĕ /кĕçнерни кун/. Тен, çакнашкал хăтланусенчен пăрăнмалла? Унсăрăн канмалли кунсенче урăран ура иртмиех ывăнатăр.

**Вăкăр.** Вăкăрсем вăхăта уçă сывлăшра ирттересшĕн. Мĕншĕнни те паллă: çанталăк питĕ ырă. Пĕлтерĕшлĕ тĕл пулăва та /тунти кунпа эрне кун/, ĕçлеме е вĕренме те /юн кун/ каясшăн мар. Мĕн тăвăн? Сивĕ квас е шыв ĕçсе чирлесрен сыхланмашкăн çеç сĕнме пултаратпăр. Çапах эрнен иккĕмĕш çуррине урамра сĕм çĕрлечен ан çӳрĕр.

**Йĕкĕреш.** Йĕкĕрешсем ку эрнере хăйсем валли мĕнле те пулин киленĕç тупĕç. Сăмахран, юлташĕсемпе пĕрле ют хулана экскурсие кайĕç /тунти кун çул çӳревшĕн ăнăçлă/, савни тупĕç /юн кун тĕл пулма калаçса татăлăр/. Ăслăлăх енĕпе ĕçлекенсем пысăк çитĕнӳ туса чапа тухĕç /эрне кун/.

**Рак.** Ку эрнере тахçантанпах курман юлташăрсене тĕл пулатăр. Тунти кун хĕр тусăрпа курнăçатăр – унăн та, сирĕн те пушă вăхăт тупăнĕ. Ытлари кун аякри тăванăр хăнана килĕ, кăсăклă хыпарсем пĕлтерĕ /кĕçнерни кун/. Пуçлăхăрпа вара тунă çитĕнӳ пирки канашлама, палăртнă ĕçе сӳтсе явма тивĕ /эрне кун/ – тĕплĕн хатĕрленĕр.

**Арăслан.** Арăслансем тунти кун кинотеатра кайса тахçанах курма ĕмĕтленнĕ фильмпа киленĕç, юн кун курава çитсе килĕç, картинăсене юлташĕсемпе сӳтсе явĕç, кĕçнерни кун паркра уçăлса çӳрĕç, эрне кун вара ача садĕнчи уява хутшăнма тивĕ. Çапах канмалли кун та ывăннине туймастăр.

**Хĕр.** Мăшăрăр /савнийĕр/ кăмăлсăрланĕ, мĕнпе те пулин хăратĕ /тунти кунпа ытлари кун/. Çăлтăрсем сире чăтăмлă пулма сĕнеççĕ. Çапах чеелемне пĕлни те пăсмĕ. Юн кунпа кĕçнерни кун ун патне шăнкăравлăр – мĕн каламаллине хăвăрах лайăх пĕлетĕр. Эрне кун тĕл пулма май тупăр – йăлтах йĕркене кĕрĕ.

**Тараса.** Ĕçре нимĕнле пăтăрмах та сиксе тухмĕ, анчах кĕçнерни кун ĕçре сĕм çĕрлеччченех юлмалла пулĕ: эрне кун пĕлтерĕшлĕ пухăва хутшăнмалла-çке. Пушă вăхăтра /вăл пуласса шанас килет/ юлташăрсемпе калаçăр /тунти кунпа кĕçнерни кун/, çемьепе кинофильм курăр /ытлари кунпа шăмат кун/, канмалли кун тăванăрсем патне çитсе килме тăрăшăр.

**Скорпион.** Эрне пуçламăшĕнче йывăрлăхсем пулĕç, анчах юн кун йăлтах уçăмланĕ, çавăнпах кăмăлăр та çĕкленĕ. Кĕçнерни кун тусăрсем пулăшнипе çивĕч ыйтăва татса паратăр, эрне кун çитес вăхăтра мĕн-мĕн пурнăçламаллине палăртатăр. Пуçăра ан усăр – çăлтăрсем ăнăçу пуласса шантараççĕ.

**Ухăçă.** Вак-тĕвек пулăмсемех хĕпĕртеме хистĕç. Юратнă çыннăр парнепе хавхалантарĕ /асăрхăр: тунти кунах/, пурнăçланнă тĕллевĕр малашлăха çирĕп утма май парĕ /ытлари кун/, юлташăр икĕ-виçĕ уйăх каялла илнĕ кивçене тавăрса парĕ /кĕçнерни кун/, урамрах паха япала тупатăр /эрне кун/.

**Ту качаки.** Пăхăнма пĕлĕр: тунти кун – юратнă çыннăра, ытлари кун – ĕçтешĕре /ăна ăмсанатăр пулин те/. Юн кун аçăр-аннĕр патне çитсе килĕр – вĕсем сире пĕлтерĕшлĕ хыпар каласшăн. Эрне кун юлташăрсен сăмахне итлĕр – вĕсен шухăшĕ тĕрĕсех. Канмалли кунсенче пахчара тăрмашăр, хĕле хатĕрленĕр.

**Шыв тăкан.** Çăлтăрсем сире çитĕнӳ тума пулăшĕç, çавăнпа пуç усса ан ларăр, çанă тавăрсах ĕçлĕр. Енчĕк палăрмаллах хулăнланĕ /тунти кун/, йăнăшăра асăрхамĕç /кĕçнерни кун/, интереслĕ çынна тĕл пулатăр /эрне кун/. Ас тăвăр: çыхăнăва ан çухатăр – вăл сире каярахпа пулăшĕ. Вырсарни кун канатăр.

**Пулăсем.** Эрнен пĕрремĕш çуррине Пулăсем çав тери иккĕленеççĕ: тĕрĕс утăм тăватăп-ши? Пĕлсех калаçатăп-ши?.. Вăрахчен шухăшласан кая юлма пултаратăр, çавăнпа суйланă çулпа ним пăшăрханмасăрах утăр. Вак-тĕвек ĕçсемпе ан аппаланăр, пĕлтерĕшлисене пурнăçлăр.

# Çанталăк



| | кăнтăрла | çĕрле |
|---|---|---|
| 05.07 | + 23 | + 13 |
| 06.07 | + 24 | + 13 |
| 07.07 | + 23 | + 13 |
| 08.07 | + 23 | + 14 |
| 09.07 | + 22 | + 12 |
| 10.07 | + 21 | + 14 |
| 11.07 | + 20 | + 11 |

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
ЗОЛОТОЙ ФОНД ПРЕССЫ MMVIII
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директор-тĕп редактор А.П.ЛЕОНТЬЕВ
Номер редакторĕ Г.А.МАКСИМОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ /директор-тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь-техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор Н.Г.СМИРНОВА

Редакципе издатель адресĕ: 428019, ШУПАШКАР, ИВАН ЯКОВЛЕВ ПРОСПЕКЧĔ, 13, ПИЧЕТ ÇУРЧĔ, III ХУТ, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор-тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренӳ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-85-87 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-82-91 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ,
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерӳсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ, hypar2008@rambler.ru
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай
/8-835-38/2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
Факс: (8352) 28-83-70
Электрон почта: hypar@mail.ru
Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРӲСЕНЕ 316-мĕш пӳлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.

Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи.
Рекламăпа пĕлтерӳсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тӳлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшӳллĕн "Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă" рубрикăсенче пичетленеççĕ.
Номере 04.07.2014 алă пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре алă пусмалла, 20 сехет те 45 минутра алă пуснă.
Тираж 8593. Заказ 2445.
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.